# Муркаш районĕнчи Москакасси тăрăхĕнче пурăнакансем… юратма пĕлеççĕ • 4 стр.

*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр… Эсир пуртан кил-çуртăм ăша*

ХЫПАР

1997 çулхи кăрлачăн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

# Чăваш хĕрарăмĕ

6 (824) №, 2014, нарăс, 15

Хакĕ ирĕклĕ.

16+

Хаçата электрон адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.

Кил-çурт ача-пăчапа илемлĕ. **2 стр.**

Олимпиадăра чăваш йĕрĕ те пур. **3 стр.**

Мăшăр киле вăхăтра таврăнманшăнах кĕвĕçмелле-и? **4 стр.**

Телей çичĕ тинĕс урлă та çавăрать. **5 стр.**

Пахча çимĕç тата чечек акмалли уйăх календарĕ. **8 стр.**

Ĕнерхи савни тĕл пулăва чĕнчĕ… **9 стр.**

Сарлака сакăн та хĕрри пур. **10 стр.**

Ӳнерçĕ пĕр картинăна 20 çул калăпланă. **11 стр.**

Сухан шуратнă чух макăрас темесен… **12 стр.**



М.ТУМАЛАНОВА сăн ÿкерчĕкĕ.

2 стр.

# Ĕç киленӳ кӳрет, çамрăклăха тăсать

Ялта выльăх усракан сахаллансах пырать, Муркаш районĕнчи Мăрсакассинчи Потряковсен вара витере йыш хушăнсах тăрать. «Эпир яланах 2-3 ĕне пăхнă, сысна çăвăрлаттарнă», – калаçăва пуçлаççĕ Николай Витальевичпа Милия Викторовна. Тенкĕ çуме пус хушма пĕлеççĕ çав вĕсем. Ахальтен мар тивĕçлĕ канăва тухнине пăхмасăрах 6 ĕне таран тытаççĕ. Эпĕ çитнĕ вăхăтра пĕчĕк пăрушĕсене картишне уçăлма кăларнăччĕ. Сурăхсем валли уйрăм вырăн хатĕрленĕ. Ĕçрен хăраманнисен, чăн та, ларса канма та вăхăт çук.

«Улттăшне те хам сăватăп. Çак ĕç мана киленӳ çеç кӳрет», – ăнлантарать кил хуçи арăмĕ. Ăна мăшăрĕпе ачисем ĕне сумалли аппарат та парнеленĕ. «Алă вăйĕ пур, çавăнпах ăна тытас та килмест», – техникăна мар, хăйне шанма хăнăхнине ĕнентерет хĕрарăм. Хĕлле 1 литр сĕте 20 тенкĕпе сутни савăнтарать Потряковсене. Ачи-пăчине, мăнукĕсене пулăшассишĕн кунĕн-çĕрĕн ĕçлеме хатĕр вĕсем.

*Юрату суккăр пулсан та хура-шурра уйăрать.*
Каларăш.

**«Чăваш хĕрарăмĕ» хаçата çитес çур çуллăха хальхи хакпа çырăнтарма пуçланине аса илтеретпĕр. Пирĕн кăларăма 2014 çулăн иккĕмĕш çурринчен илсе тăмашкăн почта уйрăмĕсенче пуш уйăхĕн 31-мĕшĕччен 243-18 тенкĕпе çырăнма пулать.**



## ÇАНТАЛĂК

| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 15.02 | + 1 | 0 |
| 16.02 | + 1 | - 1 |
| 17.02 | + 1 | - 1 |
| 18.02 | + 1 | - 1 |
| 19.02 | 0 | - 3 |
| 20.02 | 0 | - 2 |
| 21.02 | - 2 | - 7 |



ТĔСЛĔХ ШАЙĔНЧЕ

# Ырă кăмăллăх, тĕрĕслĕх çулĕпе

**Çитмĕл çул каялла Канаш районĕнчи Вăтакас Татмăш ялĕнчи Ефремпа Иульяна Михайловсен çемйинче пĕрремĕш ача Валентина çуралнă. Каярахпа Зинаида, Людмила, Светлана, Николай, Валерий çут тĕнчене килнĕ. Асли пулнă май Вальăн ашшĕ-амăшне килти хуçалăхри ĕçсенче пулăшма, йăмăкĕсемпе шăллĕсене пăхма тивнĕ. Ефрем Михайлович Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине хутшăннă, разведкăна çӳренĕ, сусăрланса таврăннă. Каярахпа Йăлмачча ял канашĕн секретарĕнче тăрăшнă. Иульяна Константиновна «Мир» колхозра агрономра ĕçленĕ.**

Валя çичĕ çухрăмри Янкăлч шкулне утнă май çул хĕрринчи чечексемпе, хумханса ларакан тырă уйĕпе киленнĕ. Биологи предмечĕпе кăсăкланать мар-и хĕр ача? Çавăнпах шкултан вĕренсе тухсан И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институчĕн биологипе хими факультетне çул тытнă. «Вĕренме кĕрсен урампа килĕп, кĕреймесен – анкартипе», – тенĕ Валя ашшĕ-амăшне Шупашкара тухса каяс умĕн. Экзаменсем тытнă вăхăтра абитуриентсемпе пĕрле вăл спорт залĕнче выртса тăнă. Батон, «минтер» канфет, сивĕ шыв – кун каçа çак апатпах çырлахнă. Вăтакас Татмăш хĕрĕ экзаменсене ăнăçлă тытса студентсен йышне кĕнĕ. Савăннипе амăшĕпе калаçса татăлни пуçĕнчен тухса ӳкнĕ: вăл килне пахча хыçĕпе таврăннă. «Кĕреймерĕн-им, хĕрĕм?» – ыйтнă Иульяна аппа кулянса...

Валентина тăрăшса вĕреннĕ. И.Олигер, О.Каховская, И.Анишкин, Р.Цеханский доцентсен кашни лекцийĕ ăна çĕнĕлĕхпе илĕртнĕ. Студент пурнăçĕ çав тери тулли те кăсăклă иртнĕ. Комсомолка, активистка, чиперкке – çак сăмахсем ун çинчен каланăнах туйăнаççĕ. Кунтах вăл турă пӳрнипе, пулас историкпе Тихон Сергеевпа, паллашнă. Диплом илнĕ хыççăнах вĕсем çемье çавăрнă.



1970 çулта Валентина Ефремовна И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн медицина факультетĕнче тин кăна йĕркеленнĕ пĕтĕмĕшле биологипе гистологи кафедрине ĕçе вырнаçнă. Ассистентран профессора çити ӳснĕ, 1976 çулта – ăслăлăх кандидачĕн, 1991 çулта докторĕн ячĕсене тивĕçнĕ. Валентина Ефремовна общество ĕçĕнче те хастар: профбюро членĕ пулнă, «Канашсем» ентешлĕхĕнче тăнă. Çавăн пекех тĕрлĕ шкулта профориентаци урокĕсем ирттерет. Вĕрентӳпе воспитани ĕçĕнчи ӳсĕмсемшĕн, сывлăх сыхлавĕ валли квалификациллĕ специалистсем хатĕрленĕшĕн Валентина Сергеева хисеплĕ ятсене тивĕçнĕ. Ăна тав хучĕсемпе, медальсемпе, кăкăр паллисемпе чысланă.

Валентина Ефремовна мăшăрĕпе, истори ăслăлăхĕсен докторĕпе Тихон Сергеев профессорпа, икĕ хĕр çитĕнтернĕ. Иккĕшĕ те ашшĕпе амăшĕн тăрăшулăхне кура яваплă çын пулса ӳснĕ. Асли Алина – инженер-программист, Чехири Бенешов хулинчи техника колледжĕн студенчĕсене информатика, биологи тата хими вĕрентет. Тихон Сергеевичпа Валентина Ефремовнăн чи пысăк пуянлăхĕ – ачисем тата Анна, Петра, Камила, Мартин мăнукĕсем.

Халăхра ĕмĕр ирттересси уй урлă каçасси мар теççĕ. Çичĕ теçеткене Валентина Ефремовна «Ыр кăмăллăх, тĕрĕслĕх саккунĕсемпе пурăнмалла, пултарнă таран ĕçлемелле» девизпа ирттернĕ. Малашне те вăл унтан пăрăнмĕ.

**Виталий АЧЧА.**
Автор сăн ӳкерчĕкĕ.

ХАРСĂРРИСЕМ

# Ĕç килену́ кӳрет, çамрăклăха тăсать

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.

## Чуна лăплантарма

«Хуçалăхри 1 ĕне – тетте вырăнĕнче анчах. Вăй питтисен выльăх-чĕрлĕх ытларах усрамалла. Ĕçлесен çын çамрăк курăнать, эрех ĕçсен час ватăлать», – çирĕплетет Николай Витальевич. Пенсие тухиччен инженерта, водительте, ял хуçалăх, автобаза ертӳçинче, Москакасси ял тăрăх пуçлăхĕнче вăй хунă вăл. «Выльăх çумĕнче чун лăпланать, тарăхни те самантрах иртет», – тет çемье пуçĕ.

5 çул каялла çак тăрăхри 113 ĕнене пĕр кĕтĕве хăваланине ас тăвать халăх. Унтанпа лару-тăру самай улшăннă. Пĕлтĕр кĕркуннене 48 пуç çеç юлнă. Мăрсакассинче, тĕслĕхрен, мăйракаллă шултра 17 выльăха шута илнĕ, вĕсенчен 6-шĕ – Потряковсен. 6 кун кĕтӳ пăхасси те хăратмасть вĕсене.

## Выльăха юратать

«Манăн атте ветеринарта, конюхра ĕçленĕ. Выльăх-чĕрлĕхе çав тери юрататчĕ. Эпĕ те ăна пăхнă. Пĕчĕкренпех лаша утланса çӳреттĕм. Ăçта кăна çитмен-ши? Çитĕнсен атте çулне суйлас шухăш тытнăччĕ, анчах зоотехника вĕренме кĕреймерĕм. Çакăн хыççăн сутуçă ăсталăхне ăша хывма лекрĕ», – каласа кăтартать кил хуçи арăмĕ. Хăйĕн шăпипе тахçанах çырлахнă Милия Викторовна. Нимшĕн те ӳпкелешмест вăл. Пурнăç çапла çаврăнса килнишĕн хĕпĕртет анчах.

Практика вăхăтĕнче пулас мăшăрĕпе паллашнă вăл. Салтакран таврăннă яш Мăн Сĕнтĕр универмагне çĕнĕ çи-пуç туянма кĕнĕ те чиперккене куç хывнă. Кайран иккĕшĕ клубра тĕл пулнă. «Ман çума пĕр каччă пырса ларчĕ. Лайăххах пăхрăм та – хама килĕшнĕ йĕкĕт иккен», – йăл кулса аса илет Милия Викторовна. Юрату авăрне лекнĕскерсем 3 уйăхранах тăванĕсене туй кĕрекине пуçтарнă. Асамлă çав туйăм халĕ те вăй парса тăрать вĕсене.

«Юрласа-ташласа пурăнас килет те, анчах капăрланса сцена çине тухмашкăн вăхăт çук», – пытармасть кил вучахне упракан. 5 сехетре ура çине тăрсан та çĕрлечченех ĕç пĕтмест ял çыннин. Сĕт пуçтарма киличченех, тĕслĕхрен, выльăх-чĕрлĕхе апатлантарма та, витене тасатма та ĕлкĕреççĕ вĕсем.

Çулла капанĕ-капанĕпе утă-улăм хатĕрлеççĕ Потряковсем. Ун чухне ачи-пăчи, мăнукĕсем валли те ĕç çителĕклех.

## Пулăшу ыйтаççĕ

Милия Викторовна ветеринара вĕренмен пулин те выльăх чирĕсем çинчен йăлт пĕлет. Унран ял çыннисем те пулăшу ыйтаççĕ. Алă айĕнчех тĕрлĕ эмел пур унăн.

«Пĕрремĕш хут пăрулакан ĕне сехре хăпартнăччĕ. Ун чухне аялти кĕпе вĕççĕнех витене чупса тухрăм. Ĕне канăçсăрланма пуçланăччĕ. Пăрун пĕр ури тухать те каялла кĕрсе каять. Мĕн тумалла? Алă чиксе тепĕр урине шыраса тупрăм. Пăрăва çăмăллăнах туртса кăлартăм», – кирек хăш самантра çухалса кайманнине палăртать хĕрарăм. Вăр-варскер выльăха массаж тума та ӳркенмест.

Потряковсем пĕлĕве тарăнлатмашкăн нумай кĕнеке вулаççĕ, Интернет уçлăхне кĕреççĕ.

## Йăх тăсăмĕ

«Эх, мĕншĕн çамрăкрах мар-ши? Мана та алă-ура çавăрса ямашкăн патшалăх субсидипе пулăшĕччĕ», – тарăн шухăша путса сăмахлать Николай Витальевич. Çав вăхăтрах хăшĕ-пĕри çак çăмăллăхпа та усă курасшăн мар. Хупăннă кролик ферми вырăнне çĕннине çĕклесшĕн вăл. Интернетри çĕнĕ технологисен хăйне евĕрлĕхĕпе паллашнă та ĕнтĕ. Унта кăтартнă читлĕхре 200 кролик таран усрама пулать-мĕн.

«Полицире тăрăшакан ывăлăм Олег кĕçех тивĕçлĕ канăва тухĕ. Эпир ун валли ĕç хатĕрлесе хунă. Ăна ĕне пăхтарасшăн, хамăр кроликсемпе аппаланасшăн», – пĕр саслăн калаççĕ Потряковсем.

Çемье пуçĕ йăх-несĕлĕн кун-çулне тĕпчесшĕн. Темиçе сыпăкри тăвансене асра тытни пурнăçра пулăшса пынине ĕненет вăл.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**

КИЛĔШӲЛЛĔ МĂШĂР

# Кил-çурт ача-пăчапа илемлĕ

Çирĕп кăмăллă та вăйлă çынсем кăна пурнăçăн тӳрĕ çулĕ çинчен пăрăнмаççĕ, малаллах талпăнаççĕ. Çакăн пек çемьесен йышне Сăкăтра пурăнакан Нинăпа Николай Ларионовсем те кĕреççĕ. Вĕсем 50 çул пĕрле пурăнаççĕ. «Çемьере чашăк-тирĕк шакăртатни те пулать, çапах та эпир яланах каçарма тăрăшатпăр. Çакă та пĕр-пĕрне хисепленине, юратнине, сума сунине çирĕплетет», – тет Нина Николаевна. Вĕсен ачалăхĕ вăйă выляса мар, колхоз уй-хирĕнче ĕçлесе иртнĕ.

«Пĕчĕкренех ака-суха тунă, утă-улăм пуçтарса тирпейленĕ, çĕр улми лартнă, çумланă, кăларнă. Тата хальхи пек «кăвак çулăм» ырлăхĕ пирки тĕлленмен те. Вăрманта кăкăр таран юр ашса вутă-шанкă хатĕрленĕ. Ăна çунапа туртса килсе, татса-çурса пӳрт ăшăтмалла пулнă. Выльăх усранă пулсан та тăраниччен аш-какай çисе курман, налук тӳлесе тăнă. Ял тăрăхĕн специалисчĕсем налук пухма тытăнсанах аннепе тĕп сакайне пытанаттăмăр. 9 класс пĕтернĕ хыççăн манăн çав тери малалла вĕренес килетчĕ. Анне пĕчченех çитĕнтернĕ те – укçа-тенкĕ çитсе пыман. Çавăнпах ялти пăру фермине вырнаçма тиврĕ. Каярах Патăрьелти дезинфектор курсне пĕтерсен санэпидемиологи станцийĕнче ĕçлеме пуçларăм. Унтанах тивĕçлĕ канăва тухрăм. Пурнăç хăй еккипе чупнă – ачасене те çитĕнтернĕ, çурт-йĕр те çавăрнă. Тенкĕ çумне пус хушма тăрăшнă, ĕçкĕ-çикĕпе иртĕхмен», – тет Нина аппа. Халĕ те ĕççĕр ларма юратмасть, колхозра сухан, кишĕр, çĕр улми пуçтарма хастар хутшăнать. Çав вăхăтрах ялти чиркӳре те тăрăшать вăл. Тĕн пĕр уявĕ те унсăр иртмест. Каçсерен тĕрлĕ япала çыхать, питĕ хитре тĕрлет. Килĕнче яланах тирпейлĕх хуçаланать вĕсен.

«Пурнăç питĕ йывăрччĕ, çапах та эпĕ Саратоври кинематографи училищинче вĕренме хал çитертĕм. Уншăн аттепе аннене тав тăватăп», – тет калаçăва хутшăнса Николай Петрович.

Шкултан вĕренсе тухсан вăл 3 çул та 3 уйăх Тулăра хĕсметре тăнă. Десантник пулнă май 57 хут парашютпа сикнĕ. Киле таврăнсанах ялти клуба киномеханике вырнаçнă. Çак ĕçре 40 çула яхăн вăй хурса тивĕçлĕ канăва тухнă. 6 хутчен районта «Чи лайăх киномеханик» ята тивĕçнĕ. Ахальтен мар вăл – «Раççейĕн хисеплĕ кинематографисчĕ».

«Ун чухне транспорт хальхи пек умлă-хыçлă чупман, кинолента тултарнă тимĕр ешчĕксене йăтса чылай çуран çӳренĕ. Патăрьелтен час тухаймасан сеанса ĕлкĕрес тесе пĕр чарăнмасăр 8 çухрăм чупни те пулнă. Кунĕпе çак ешчĕксене сĕтĕрнĕ, çĕрĕпе кино кăтартнă, ирхине каялла Патăрьеле леçнĕ. Çакă пулăшрĕ те мана çăмăл атлетикăпа туслашма», – аса илет Николай Петрович. Сăмах май, ăна халĕ те районти тата республикăри спорт ăмăртăвĕсенче курма пулать. Шашка-шахмат турнирĕнче те мала тухать вăл.

Ларионовсем – питĕ ĕçчен çынсем. Халĕ те картиш тулли выльăх усраççĕ, ачисене пулăшма тăрăшаççĕ. Икĕ хĕрпе виçĕ ывăла пурнăç çулĕ çине кăларнă вĕсем. Тĕпренчĕкĕсем пурте çемьеллĕ, халĕ вĕсен – 11 мăнук.

Уявсемпе канмалли кунсенче ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем пухăнсан кил-çурчĕ татах та илемленет вĕсен, кĕрлесе анчах тăрать. Кайран кашнинех пехиллесе ăсатаççĕ Нина Николаевнăпа Николай Петрович. Пысăк çак çемьери тăвансем пĕр-пĕринпе тивĕçлипех мăнаçланаççĕ.

**Нина МАЗЯКОВА.**
Патăрьел районĕ.

САМАХ ПАРĂР-ХА

# Тĕлĕрет...чĕ Лакрей вăрманĕ

**Маргарита ИЛЬИНА**

**Шупашкарти кĕрхи паркра çулçă чăштăртаттарса çӳренĕренпе виçĕ уйăха яхăн вăхăт иртрĕ. Кун пирки "Чăваш хĕрарăмĕнче" сăмах хускатнăччĕ-ха /"Атьăр, хĕрсем, парка, е Ертсе пыма пĕлмен пуçлăхсем пирки", 45 /811/ №, 2013 çулхи чӳкĕн 16-мĕшĕ/. Çаплах, çулçă чăштăртаттарнисĕр пуçне урăх мĕн тумалла пирĕн парксенче? Çĕнĕ аттракционсем çук, пуррисем те, кивелсе тĕссĕрленсе çитнипе, хăйсем патне кăчăк туртмаççĕ. Ача-пăча вара яланах кăсăклă та куçа илĕртекен çĕре сĕтĕрет ашшĕ-амăшне. Суту-илӳпе кану çĕнĕ центрĕсене сăнăр-ха: хулари пĕтĕм шăпăрлан унта кĕшĕлтетет тейĕн. Çакăн сăлтавне шыраса пуça çĕмĕрмелле те мар – ара, вăйă мĕн тĕрлĕ автомачĕ, йăлтăртискерсем, куçа йăмăх çутăпа астараканскерсем, çук унта! Парксем пирки сăмах хускатсан вара, паллă ĕнтĕ, пуçлăхсем тӳрех икĕ аллине икĕ еннелле сарма пуçлаççĕ: "Укçа çук..." Çав вăхăтрах çынсем хăйсен пуçарăвĕпе кăна мĕн тери илем кӳме пултарасси пирки никам та шухăшламасть. Укçа çук – сăмах çук...**

**Телее, сăмах – вăрă евĕр, çăвартан /калемрен/ вĕçерĕнсен пушăлăхра çухалмасть, хăйĕн тивĕçлĕ вырăнне шыраса тупса тымар ярать те... шăтса тухать. "Шупашкар: 500 çул" парка улшăнусем кĕртмелли, ăна туристсемшĕн кăсăклă вырăна çавăрмалли пикри сăмах тахçанах пырать. Пуçланă ĕçĕн вĕçĕ хăçан та пулин пур пĕр пулаканччĕ-ха. Лакрей вăрманĕ кăна ку таранччен лăпкă тĕлĕретчĕ. Ĕнтĕ хула влаçĕ симĕс ку утрава та аталантармашкăн тĕв тунă курăнать. "ЧХ" журналисчĕн сăмахĕ, шухăш-ĕмĕчĕ витĕм кӳнĕ-и е çук-и кунта – пĕлтерĕшлех мар. Чи кирли – Лакрей вăрманĕн аталанăвĕн концепцине палăртас ĕç вырăнтан хускалнă. Унсăр пуçне, ăна чиновник е архитектор пӳлĕмĕнче татса памаççĕ – концепцие сӳтсе явнă çĕре халăха хутшăнма чĕнеççĕ. Ку енĕпе пĕрремĕш утăмсем тунă та ĕнтĕ. Шупашкарти ирĕклĕ тӳремре çак ыйтăва сӳтсе явнă çĕре Гарвард бизнес шкулĕнче тата Массачусетс технологи инстиутĕнче вĕреннĕ Алекс Столярик хутшăннă. Шупашкар бюджетне шута илсе вăл тӳрех асăрхаттарнă – паллах, тĕнче шайĕнчи проектсене шăл витмĕ, çапах та Анăç питĕ хастаррăн усă кураканнисем пире валли те – чухах. Сăмах гражданисем хăйсен вăйĕпе пурнăçлама пултаракан пĕчĕк архитектура формисем пирки пырать. Йывăçран е ытти материалран Иванов е Петров хăй аллипе ăсталанă кӳлепе паркра вырăн тупни ĕç авторне, ман шухăшпа, хавхалантарать кăна, канма пыракан куçне те илĕртет. Паллах, кунта та пĕр шухăш пулмалла, анчах ку – кăткăс ыйту йышĕнчен мар.**

**Парк аталанăвĕн концепцине сӳтсе явнă çĕртен Шупашкар экс-тĕп художникĕ Дмитрий Каталымов та айккинче тăрса юлман. Вăл ытти проектировщикпе пĕрле сĕнекен план питех те илĕртӳллĕ: оранжерея, террариум, аквариум, Европа шайĕнчи физкультурăпа сывлăх центрĕ, шыв сикки тата ытти те... Паллах, аттракционсен шучĕ те çук. Пĕр сăмахпа, Лакрей çĕнетнĕ вăрманĕ çамрăксемшĕн те, ватти-вĕттишĕн те сывлăха çирĕплетмелли тата кану вăхăтне кăсăклă ирттермелли чăн-чăн центр пулса тăмалла. Чăн та, хальлĕхе çакă ытларах юмаха аса илтерет. Анчах куç хăрать те алă тăвать. Çапах та ĕмĕтри пурнăçа кĕрсен Шупашкар паркĕ Сочи "Ривьеринчен" пĕрре те кая юлмĕ. Хăй вăхăтĕнче çав паркра уçăлса çӳреме тӳр килнĕччĕ те, калас пулать, хула бюджетне кунсерен тупăш шыв пек юхса кĕрет, ахăр, унтан! Мĕншĕн тесен Сочие çитнĕ пĕр турист та "Ривьерăра" пулса курмасăр хулапа сыв пуллашмастех. Унсăр пуçне мĕн чухлĕ çынна ĕçпе тивĕçтерет парк! Эпир вара туристсене явăçтармалли меслет шыраса маччана куçпа шăтаратпăр. Укçа ура айĕнче йăваннă вăхăтра...**

**Палăртни пурнăçа кĕрсен ача-пăчана та, суту-илӳпе кану центрĕсенче пăчăхаканскерсене, уçă сывлăша туртса кăларма май килĕ.**

**Çапла, ку ыйтăва, Лакрей вăрманне кăна мар – Шупашкар ӳпкине – аталантарассине тĕнче шайĕнче йĕркелес тесен укçа-тенкĕ сахал кирлĕ пулмĕ. Ăслă çынсен сĕнĕвĕсемпе усă курса уйрăм çынсене явăçтарсан çапах ăна та татса пама пулатех. Çӳлерех асăннă Алекс Столярикăн сĕнĕвĕ ку енĕпе те усăллă пулассăн туйăнать. Вăл хысна укçине кăна шанса лармалла маррине, унпа пĕрлех уйрăм харпăрлăхçăсене те çанă тавăрма чĕнсе калать. Мĕнех вара? Калăпăр, çак енĕпе нумай нухрат хывакансен сăнĕсенчен /бюсчĕсенчен, пĕчĕк палăкĕсенчен.../ уйрăм аллея йĕркелесен "укçа хутаççисем" халăха пулăшма килĕшеççех – ĕмĕрлĕхе чапа тухса историе кĕрсе юлаççĕ-çке. Шупашкар паркне тĕнче шайне çĕклеме кам пулăшни килес ăрушăн та кăсăклă пулассăн туйăнать...**

СПОРТ

# «Тĕлĕкре те сикетĕп, чупатăп...»

**Ĕнер республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Олимп вăййисенчен таврăннă Елена Муратова спортсменкăпа тĕл пулчĕ**



– Фристайл – спортăн çĕнĕ тĕсĕ. Пирĕн енче аталанса кăна пырать-ха вăл. Çавăнпа та сăнаса пыма интереслĕ пулчĕ. Сана, Лена, пĕтĕм чунтан тав тăватăп. Олимпиадăри сумлă ăмăртăва хутшăнни хăех – çĕнтерӳ. Тренерпа мĕн пур вăя хурса ĕçленĕ хыççăн çитессинче малти вырăна тухатăрах. Эпир вара пур енĕпе те пулăшса пырăпăр, – терĕ Михаил Васильевич.

Елена Муратова пĕрремĕш чупура 18-мĕш вырăн йышăнчĕ, иккĕмĕшĕнче финиша 11-мĕш кăтартупа вĕçлерĕ. Финала тухма пĕр утăм кăна çитеймен ăна.

– Хамăн кăтартупа эпĕ кăмăллах мар. Ăмăрту финалне лекес килетчĕ, ытларах тăрăшмаллаччĕ манăн. Çакă малашлăхшăн лайăх урок пулчĕ. Çапах та Олимпиада яланлăхах асра юлĕ. Старта тухнă чухнехи самант халĕ те чĕререх. Унта мĕн туйнине сăмахпа калама та çук. Трасса çинче çăмăл пулмарĕ. Юр питĕ хытăччĕ. Юрать, ӳксе суранланмарăм. Спортсменсене йывăр килчĕ. Чи вăйлисем çĕнтерчĕç. Халь пăртак канасшăн, кайран малалла ĕçлесси пирки шухăшламалла, – терĕ тĕл пулура спортсменка. – Тупăшу хыççăн пачах та çывăраймарăм. Тĕлĕкре те пĕрмай сикетĕп, чупатăп... Маншăн чи йывăрри сикесси пек туйăнать. Океан енчен килнĕ спорт тĕсĕсенчен пĕри вăл. Çурçĕр Америкăра унпа тахçанах туслашнă, пирĕн патра вара тин çеç аталанса пырать-ха, – чунне уçрĕ Елена Муратова.

Михаил Игнатьев спортсменкăн пурăнмалли условийĕсемпе кăсăкланчĕ. Елена хваттер ыйтăвне татса панă. Аякри тăванĕсемшĕн тунсăхлать вăл. Мурманскра пурăнакан ашшĕ-амăшне Чăваш Ене куçарса килес шухăшлă.

Республикăн Патшалăх Канашĕн Председателĕ Юрий Попов та хĕллехи Олимп вăййисем иртекен хуларан таврăннă.

– Эпĕ унта ятарласа Ленăшăнах кайрăм. Хамăрăн спортсменкăна Сочире курма питĕ кăмăллă пулчĕ. Кăтартăвĕ мар, Чăваш Ен представителĕ сумлă çак ăмăртусене хутшăнма пултарни пĕлтерĕшлĕ, – терĕ Юрий Алекссевич.

Михаил Игнатьев Елена Муратовăна тата унăн тренерне Валерий Васильева чаплă лару-тăрура Тав çырăвĕ, сехет, укçан преми парса чысларĕ.

**Елена АТАМАНОВА.**

ЫРĂ ТĔСЛĔХ

# Аслă ăру çамрăксене парăнман

Паян пирĕн çĕр-шыв Олимпиада сывлăшĕпе пурăнать. Спортсменсен çитĕнĕвĕсемшĕн савăнатпăр, ватти-вĕтти те, вăй питти те – Раççей командишĕн. Нумайăшĕ çак кунсенче сенкер экран умне вырнаçнипе çырлахмаççĕ, тĕрлĕ ăмăрту йĕркелесе чунпа спортсменсемпе пĕрле иккенне палăртаççĕ.

"Локомотив" ача-пăча тата çамрăксен шкулĕ çак кунсенче сывă пурнăç йĕркине пăхăнакансене "Ăру çыхăнăвĕ" спартакиадăна пуçтарнă. Пенсионерсен союзĕн Канашри уйрăмĕ çумĕнче йĕркеленĕ "Нептун" клуб членĕсем шăпах çак девизпа пурăнаççĕ. Аслă çултисем эрнере темиçе хут та пухăнса "Локомотив" ФСК бассейнне, тренажер тата ытти залне çӳреççĕ.

Спартакиадăра хальхинче аслă ăрупа пĕрле çамрăксем, педколледж студенчĕсем, старта тухнă. Аслă ăру пурнăç опычĕпе пуян, çапах вăй-халне те çухатса пĕтерменнине ĕнентерме пултарнă: яшкĕрĕмрен пачах та юлман. Çапла вара яланхи пекех туслăх çĕнтернĕ.

**М.МИХАЙЛОВА.**

АС ТĂВĂМ

# Тивĕçе чыслăн пурнăçланă



Совет çарĕсене Афганистанран илсе тухнăранпа паян 25 çул çитрĕ. Çак пулăма Раççейре кăна мар, Совет Союзĕн йышĕнче пулнă хăш-пĕр çĕр-шывра та анлă паллă тăваççĕ.

Çак ятпа Шупашкарти П.Хусанкай ячĕллĕ культура керменĕнче Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ, Çар комиссариачĕ тата общество организацийĕсем ирттернĕ мероприятие ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев хутшăнчĕ.

– Эпир 1979 çул вĕçĕнче кӳршĕ çĕр-шывра пуçланнă вăрçа нихăçан та манма пултараймастпăр. 80-мĕш çулсенче унта пирĕн республикăран çара кайнă 5692 интернационалист воин хутшăннă. Шел те, 300 ентеш хаяр çапăçусенче пуç хунă е Чăваш Ене сусăрланса таврăннă. Афганистанра хăйĕн тивĕçне чыслăн пурнăçланă кашни ентеш паян та çитĕнекен ăрăва чăн-чăн ырă тĕслĕх кăтартать. Ахальтен мар ĕнтĕ çамрăксене патриот воспитанийĕ парас, яшсене Раççей çарне хатĕрлес тĕлĕшпе 2012-2013 çулсенче ирттернĕ Пĕтĕм Раççейри конкурсра пирĕн республика пĕрремĕш вырăн йышăннă, Раççей оборона министерствин вымпелне тивĕçнĕ. Çак çитĕнӳре сирĕн тӳпе питĕ пысăк, – терĕ Михаил Васильевич.

Уяв каçĕнче 50 ытла «афганец» Раççей Федерацийĕн Правительствин медалĕсене тата Пĕтĕм Раççейри организацисен тĕрлĕ наградине тивĕçрĕ.

**Петр СИДОРОВ.**

МАТТУРСЕМ

# Юратма... пĕлекенсем



**Пĕлтĕр Москакасси тăрăхĕ йыш хушас тĕлĕшпе районта пĕрремĕш вырăн йышăннă. Унта 54 /!/ пепке çут тĕнчене килнĕ. Ял çĕнелсе аталанни куç умĕнчех. Кермен пек çуртсем хăпартнă халăх. Чăнах, пĕри тепринчен лайăхрах пурăнасшăн.**

**Ситуккассинчи Сорокинсем, тĕслĕхрен, кирпĕчрен чи малтан хăйсене ятăн йăва çавăрнипе паллă. Унтанпа шалтан та, тултан та хăтлăлатнă ăна килĕшӳллĕ мăшăр. Çав килте 3 тĕпренчĕкне юратса, ĕçе вĕрентсе çитĕнтернĕ. Ыттисемшĕн тĕслĕх выранĕнчи Юрий Ермолаевичпа Калерия Порфирьевна «Юратушăн тата шанчăклăхшăн» медале тивĕçнĕ.**

## Мăнуксем... ташлаттараççĕ

«Тăпăрч юхтартăмăр, симĕс сухан татрăмăр та хĕрпе кĕрӳ килне мăнука курма кайрăмăр», – каласа кăтартаççĕ вĕсем. Хăнасем килсен кил хуçи арăмĕ хыпалансах хуран кукли пĕçерме пуçланă. 5 уйăхри Антон куç умĕнчех çитĕннишĕн мĕнешкел хĕпĕртеççĕ çывăх çыннисем. Юрий Ермолаевичпа Калерия Порфирьевна аслă мăнукĕсен çитĕнĕвĕсемпе те кăсăклансах тăраççĕ. Унччен те пулмарĕ, 1-мĕш класра вĕренекен Женьăпа пĕрле килти ĕçсем пурнăçлама ларчĕç вĕсем. Арçын ача кукашшĕпе кукамăшне букварьти чăвашла сăвăсене вуласа кăтартрĕ. «Мăнуксемпе çав тери хаваслă. Хăнана килсен хăйсемпе пĕрле мана та ташлаттараççĕ», – тет кулса çемье пуçĕ.

## Хисеп

«Арăмĕпе упăшкин пĕрпĕрне ăнланма тăрăшмалла, хисеплемелле, йăнăшсан каçарма пĕлмелле. Юратнине ĕçпе çирĕплетмелле», – ăса вĕрентет Калерия Порфирьевна. 40 çула яхăн Оринин-ри, Москакассинчи шкулсенче ĕçленĕ вăл. Математика вĕрентнисĕр пуçне директор çумĕн тивĕçĕсене пурнăçланă.

Юрий Ермолаевич ĕмĕр тăршшĕпех водительте тăрăшнă. Салтака кайиччен те, хĕсметрен таврăнсан та тĕлли-паллисĕр çӳресе курман вăл. «Сана намăс кăтартасранах эрех ĕçместĕп», – упăшки çапла калани арăмне хисеплени мар-и вара? «Эпĕ ăна çаканшăн халăх умĕнче те пĕрре мар тав тунă. Тĕнчере хитри нумай пуль. Анчах вăл айккине каяс шухăшпа пурăнман. Уншăн та мăнаçланатăп унпа», – хушса хурать хĕрарăм.

Арçын вулама юратать. Малтан та машина чарсанах аллине кĕнеке тытнă вăл.

## Ачасен пулăшăвĕ

Ачасем килте ĕçлени – ашшĕ-амăшĕшĕн пысăк пулăшу. Пĕчĕклех куршанак çыпăçнă вĕсен çумне. «Хăш чухне ĕç йĕркине хут çине çырса хăвараттăм», – ăнлантарать хĕрарăм. Чăнах, кашнинех пушă вăхăтпа тĕллевлĕ усă курма хăнăхмалла. Унаш-калли пурнăçра та хăйĕн вырăнне часах тупĕ.

«Ахаль ларсан юн çывăрать. Ыратсан та вăрах вырттмалла мар. Эмел ĕçсе малалла ĕçлемелле», – çирĕплетсе калать Калерия Порфирьевна. Пахчара ĕçлеме те, выльăх пăхма та ӳркенмеççĕ вĕсем. Акă чӳрече умĕнчи иçĕм çырли хунавĕсем вăй илнĕ. Вĕсене кĕркунне касса кĕртнĕ иккен. «Миçе çулçă кăларма ĕлкĕрнĕ-ши?» – кăсăкланать Женя.

Сорокинсен пахчинче çĕр çырли пысăк вырăн йышăнать. Халĕ анана кăштах пĕчĕклетнĕ. Малтан Шупашкара 26-шар витре çырла сутма çӳренине аса илчĕ мăшăр. Транспорт чарăнăвне кĕвентепе те йăтнă. Ун чухне, паллах, çемйипех пахчаран тухма пĕлмен.

«Ĕç тупаймасăр хăшкăлакан çынсене ăнланмастăп. Республика тулашне каймасăрах укçа тума май пур. Ялта, сăмахран, выльăх самăртма, ĕне усрама пулать», – калаçăва тăсать Калерия Порфирьевна. Хулара та ĕç тупма йывăрах мар паян. Чăн та, ыррине шанакан, пурнăçа йĕркелесе пыма пĕлекен çын ниçта та çухала каймĕ.

Олимпиадăпа çыхăннă кашни пулăма пĕр журнала пуçтарса пырать хĕрарăм. Çакă историе юлакан пулăма асра тытма пулăшĕ. Унсăр пуçне выльăх-чĕрлĕхпе, медицинăпа, пахчапа çыхăннă усăллă канашсен журналĕсем те ал айĕнчех унăн. Çакă та вăхăта перекетлеме май парать.

Калерия Порфирьевна юрлама-ташлама ăста. «Шурăппа» фольклор ушкăнĕпе пĕрле Юнкăна концертпа кайма хатĕрленетчĕ вăл. Москакасси тăрăхĕнчи хĕрарăмсене пур çĕрте те хапăлласа йышăнаççĕ. Ахальтен мар пĕлтĕр 20 ытла концерт йĕркелеме вăй çитернĕ çак ушкăн.

**Марина ГРИГОРЬЕВА.**
Муркаш районĕ.
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

ЫЙТĂМ

# «Качча илмесен килне кайса ларăттăм...»

**Юрату – чечек, шăварсах тăмасан шанать, типет, хăрать... Юрату – кăвайт, вуттине хурсах тăмасан сӳнет... Çулсем иртнĕ майăн шăварма та, вут хума та манатпăр ахăр. Юратнă çынна яланах çумра курас килет. Анчах йăла ыйтăвĕсем асамлă çак туйăма ырă витĕм кӳмеççĕ. Калăпăр, киле вăхăтра çитеймени пулать тепĕр чухне. Е ĕçре уяв, е тата тантăш чунне уçасшăн. Пĕрин ача çумалла, теприн никампа сăра ĕçме çук. Юлташ чĕнсен хирĕçлеме аван мар пек. Çул çинче пăтăрмаха, инкеке çакланасси те пулать. Çапах та арăмĕ е упăшки киле вăхăтра таврăнманни мĕнле шухăш çуратать?**



**Павел, сутуçă, 29 çулта:**

– Каçхи вунă сехет тĕлне арăм киле таврăнмасан тӳрех «урăх арçын тупнă» е «тантăшĕсемпе пĕрле канать» тесе шухăшлама тытăнатăп. Эпĕ лăпкă çын, йытă пек сиксе ӳкместĕп, анчах та ним пулман пек те ирттерсе яраймастăп. Йĕкĕлтесе кулатăп, вăрçтаратăп... Туйтăр хăйĕн айăпне. Йĕркеллĕ хĕрарăм мăшăрне ним каламасăр çĕрĕпе çӳремест. Енчен те темиçе хут шăнкăравласан та телефонне тытмасан ют арçын пирки шухăш пĕтет, «инкек сиксе тухмарĕши» тесе сисчĕвленсе ӳкетĕп.

**Рая, вĕрентекен, 38 çулта:**

– Ман арçын сыпма юратать. Ĕç хыççăн киле таврăнмасан çĕрлесĕр кĕтмелли те çук. Хĕрарăм кирлĕ мар ăна. Ясар арçын мар вăл, айккинелле чупатех тĕк халĕччен сисĕттĕм. Ялта нимĕн те пытараймастăн, киле килсех каласа кăтартаççĕ. Хаярри тĕлне лексен кĕленче хыççăн кĕленче пушатмасăр чарăнмасть. Киле таврăнсан çывăрмасăр тарăхтарать. Ӳсĕрле чĕлхи чараксăр, тем те пĕр каласа кӳрентерет. Ăçта ĕçнĕ, çавăнта выртса юлтăрччĕ тесе кăна тăратăп. Çук вĕт – киле таврăнма çул тупатех! Юрату та, килĕшӳ те çук ĕçкĕçпе. Ывăнтăм, ачасем пĕчĕккине пăхмасăрах уйăрлса каятăп. Карланкине чарайманнине пулах çемье арканать ĕнтĕ.

**Ирина, повар, 40 çулта:**

– Паллах, ют хĕрарăмпа йăпанать. Юлташĕсемпе çĕрĕпе ларас та çук вăл. Упăшка телефонне манран пĕрмаях пытарать. Çĕрле минтер айне хурать. Кунĕпе хăйĕнчен ниçта хăвармасть. Сĕтел çинче выртнине нихăçан та кураймăн. Телефоншăнах мĕн чухлĕ вăрçăнман-ши эпир? "Сана мĕн ĕç?" – тесе пĕрмай çăвара хуплать. Ӳсĕрле пытарма мансса каять те... Лена, Галя, Люба... кам кăна çук пуль унта! Тăванĕсем мар – вĕсене хушаматпа палăртать. Юрату çырăвĕсем те вуласа куртăм. Хĕрарăмĕсемпе те вăрçăнтăм. Хамах мĕн кăна калаcа кӳрентермерĕç. Лĕкленterет çакăн хыççăн. Пĕлменни лайăхрах та иккен. Енчен те кам-тăр шăнкăравласан упăшка чылай чухне ман умра телефон тытмасть. Ку е вăл çынна пĕлмест имĕш. Ăçта кайнине каламасть, ялан юлташпа тĕл пулмалла унăн, кама-тăр таçта леçсе ямалла. Сăлтавĕ тупăнсах тăрать. Чăтăмлăхăм пĕтрĕ. Телейĕм çук ман. Йăлтах каласа кăтартаяс çук, тăшман та ан куртăр ман пурнăçа. Ĕçкĕç арçын та тарăхтарать, ютти патне чупаканнине тата чăтма йывăртарах.

**Валери пичче, хуралçă, 60 çулта:**

– Мĕн кулянмалли пур? Килти выльăх килех таврăнать. Халь тин ман арăм кама кирлĕ? Чи кирли – ĕнене вăхăтра сутăр, апат пĕçертĕр... Вăл манăн йĕркеллĕ хĕрарăм, халĕччен намăс кăтартман.

**Валентина, медсестра, 43 çулта:**

– Упăшка киле таврăнмасан эпĕ çывăрма та выртмастăп, апат та çиейместĕп. Кулянса вилетĕп. Айккинелле чупасран пăшăрханмастăп, хăйĕнпе мĕн-тĕр пуласран шикленетĕп. Сергей хаяр çын мар, хирĕç çапма та пултараймасть. Сахал-им урамра усал çын, йăвашшине сăнран пăхсах пĕлеççĕ. Лайăх ман упăшка, юттисем патне чупса та тарăхтарман.

**Светлана, сутуçă, 54 çулта:**

– Ман чун тахçанах сивĕннĕ. Килет-и, килмест-и – пур пĕрех. Вăхăтĕнче макăрнă, куляннă. Юратнă эпĕ ăна тахçан, çавăнпах кĕвеçнĕ. Майрисенчен те пайтах сивĕтнĕ, вăл татах çĕннине тупатчĕ. Мĕнле чăтнăши? Упăшкана эпĕ хам никампа та улăштарман.

**ЛЮБОВЬ, кондуктор, 28 çулта:**

– Эпир иксĕмĕр те кĕвĕç чунлă мар. Вăл сантехника вырнаçтарма ăста. Хам килте чухне упăшка талăкĕпех ĕçлесен те ятлаçас çук. Ара, кашни пус çемье бюджетне кĕрет. Укçаран, чăн та, татăк пурăнмастпăр. Эпĕ ĕçре тытăнса тăрсан кĕçĕн пепкене садикрен мăшăр илет. Юратьха тепри, шкула каяканни, хăй тĕллĕнлĕхе вĕренчĕ. Пирĕншĕн çакă – пурнăç йĕрки.

**МИХАИЛ, ĕçсĕр, 43 çулта:**

– Манăн арăм – медсестра. Вăл сайра хутра кăна ĕçрен киле вăхăтра çитет. Унсăр пуçне кирек хăçан та чирлĕ çын патне чĕнсе кайма пултараççĕ ăна. Вăл мана урăх арçынпа улталамĕ. Унсăрăн ялта ят каять. Чим, эс хăв çемьеллĕ-и? Упăшку ăçта ĕçлет? Миçе ача çитĕнтеретĕр? Телефон номерне кала ĕнтĕ...

**ЗИНАИДА, администратор, 50 çулта:**

– Киле мĕн чухлĕ каярах юлса таврăнать – çавăн чухлĕ лайăхрах. Кăнтăрла ĕлкĕрейменнине çĕрле туса çитертĕр. Сантехник валли кирек хăçан та ĕç тупăнать. Манăн çакнашкал вăрттăнлăх пур: хăнана кайсан унăн ӳсĕмне пĕчĕклетсе, хамăнне пысăклатса кăтартатăп. «Çамрăк çын ватăлса кайнă-çке», – тет хăшĕ-пĕри. Ку хĕрарăм ытла аслă тесе ман çума та çыпăçмаççĕ. Апла тăк пĕр-пĕрне кĕвĕçмелли сăлтав та çук.

**ТАТЬЯНА, парикмахер, 50 çулта:**

– «Сана качча тухман пулăттăм. Урăххипе пĕрлешнĕ тĕк телей тупăттăм», – пăшăрханса калаççĕ пĕлĕшсем. Манăн вĕсемпе килĕшес килмест. Лайăх арăм çумĕнче путсĕр упăшка та хисепре. «Çамрăклăха таврăнас пулсан нимĕн те улăштарас килмест. Çав арçынпах мăшăрланăттăм. Качча илмесен килне кайса ларăттăм», – тетĕн халĕ. Упăшкапа иксĕмĕр пĕр-пĕрне урăххи çумне кĕвĕçе курман. Манăн шухăшпа, ырлăхран ырлăх ширамаççĕ.

Эпĕ, тĕслĕхрен, кунĕпе миçе арçынпа калаçу пуçаратăп-ха та. Вĕсемпе ĕç хыççăн тĕл пулу шыраса çӳретĕп-и? Мана юратнă упăшкасăр пуçне урăх арçын кирлĕ мар.

**НИКОЛАЙ, тивĕçлĕ канура, 62 çулта:**

– Арçын – автан пекех. Килте темĕнле хăтлă пулсан та кӳрше каçасшăн вăл. Халĕ юттисемпе хутшăнас вăхăт иртнĕ ĕнтĕ. Мăшăр мăнуксене пăхать. Ăна пурнăç тăршшĕпех шаннă.

**Юрату кăварне**
**Марина ТУМАЛАНОВĂПА**
**Елена АТАМАНОВА**
**тĕлкĕштернĕ.**

ШĂПА

# Телей тивлечĕпе ĕçчене килет хисепĕ

**Укçине аппа хăй пурнăçĕ пирки каласа кăтартма тытăнсан тўрех Юрий Скворцовăн «Ухах хурăнĕ» повеç аса килчĕ. Асăннă произведенири Ухахви пекех çĕр çывăрми, ырми-канми ĕçленĕ Укçине. Ачалăхĕ пулман та тейĕн унăн. Амăшĕн ăшшине те туйса курман хĕр ача. Мĕн пур йывăр ĕç ун çине тиеннĕ. Юрать-ха, повеçри герой пек чирлесе хĕне кайман. Йывăр аманнă хыççăн çамрăк хĕр ура çине тăнă. 89 çула кайнă Ксения Никифорова халĕ Çĕрпў районĕнчи Шалчакассинче пурăнать.**



## Виçĕ тăлăх

– Кăрлач уйăхĕччĕ ун чухне. Çанталăк калама çук сивĕччĕ. Валя йăмăкăм урамран выляса кĕчĕ те шăнса кўтнĕскер анне çумне выртрĕ. Çичĕ çулта пулин те кăкăр тытмасăр çывăрса каяймастчĕ. Пăхатпăр та – анне сывламасть, вилсе кайнă, – куççульне шăлса каласа кăтартать Укçине аппа. Хăй те вун тăваттăра çеç пулнă ун чухне, йăмăкĕ Зина – вуннăра. Çапла виçĕ хĕр тăлăха тăрса юлать. Чирлесе вилет амăшĕ. Хĕрарăмăн пĕрмай пуçĕ ыратнă. Айккинелле чупакан упăшкинчен ыррине курман мăнтарăн хĕрарăмĕ. Сăлтавсăрах алă çĕкленĕ мăшăрĕ, чылай чухне вара пуçран тапа-тапа хĕненĕ. Амăшне шăн тăпра айне кайса чикнĕ хыççăн мĕн пур йывăр ĕç асли çине тиенет. Кăштахран ялта кăçатă туса пурăнакан ват хĕре илсе килет ашшĕ. Ама çури амăшĕ пирки япăххине каламасть Ксения Никифоровна. Ăшă та ырă кăмăллăскер кўрентерсе курман тăлăхсене. Хĕрхеннĕ вĕсене, виççĕшне те хăй ачи вырăнне хурсах юратнă.

## Тăрăшуллă чăваш хĕрĕ

Вăрçă пуçланать. Тăрăшуллă хĕре асăрханах çав ĕнтĕ. Кĕркунне Тăвайне окоп чавма яраççĕ. Укçине ун чухне вун пиллĕкре çеç пулнă. «Эпĕ лумпа пăр катаканниччĕ. Кашни кун виçĕ метр тарăнăш чаватпăр, тепĕр кунне каллех юр хўсе лартать. Апат леçме килнĕ атте шеллесе пулăшатчĕ пире», – аса илет Укçине аппа. Пĕр старик патĕнче саккăрăн пурăннă вĕсем. Тăраничен апат та çисе курайман. Ирхине выçăллах хире кĕреçе, лум йăтса утнă. Апатланнă хыççăн кил хуçи яшкана шыв ярса хурнă...

Тăвата уйăх окоп чавнă Укçине. Тăван яла пуш уйăхĕнче çеç таврăннă. Шыва путса килне йĕп-йĕпе çитсе ўкнĕскере тепĕр куннех Канаша илсе каяççĕ. Тумтирĕпе атă-пушмакĕ типсе те çитеймен... Унпа пĕрле пулнă Кăшнаруй икĕ арçынни... тарнă. Ытти районтан килнĕ хĕрсем те пĕрин хыççăн тепри таçта çухалса пĕтнĕ. Укçинене Свердловск хулине ФЗОна ăсатаççĕ. Вун улттăри хĕр «Уралмаш», станоксем тăвакан заводсенче, табак фабрикинче тăрăшать. Малярта çĕрĕн-кунĕн вăй хураканскер пĕррехинче çўлтен ўкет, çитменнине çурăмĕ çине хăма персе анать. Хăраса ўкнĕ хуçа сыватмăша леçме те ирĕк памасть хĕре, тăнсăр пулнăскере хывăнса тăхăнмалли пўлĕме пăрахаççĕ. Çурăмне спиртпа сăтăрнă хыççăн кăшт майлашăнать вăл. Каллех ĕçе пикенет, çурăм шăмми ыратнине пăхмасăрах шурлăхлă вăрманта çĕрĕнкунĕн йывăç сĕтĕрет. Апат çимелли карточкăна кăларса илнĕ хыççăн вунă кунлăха çăкăрсăр хăвараççĕ. Украина хĕрарăмĕ, ырă кăмăллăскер, выçă вилме паман Укçинене. Чăваш хĕрĕн ĕçченлĕхĕнчен, çирĕплĕхĕнчен питĕ тĕлĕннĕ вăл. Киле каяс умĕн çичĕ кĕпелĕх катан пир пĕветсе панă тăлăха. Мĕн тери савăннă Укçине. Унран хаклă парне пулма та пултарайман.

Маруç аппăшне аса илнĕ май халĕ те куçĕ шывланать хĕрарăмăн.

## Тăван яла – тăватă çултан

1945 çулхи çĕртмен 23-мĕшĕнче тин киле таврăнать Кăшнаруй хĕрĕ. Вун тăхăр çулта пулнă ун чухне. «Канашран тухнăччĕ эпĕ, Пикшихелле килетĕп. Вăрçă вĕçленнĕрен питĕ савăнăçлă. Çутă кăвак чăматанпа, сумкăпа, çурăм хыçĕнче – кутамкка. Кантăр вăрри, хĕвел çаврăнăш туяннă хам», – каласа кăтартать Ксения Никифоровна. – Çул хĕррипе – йывăççем. Хурăнсен хыçне пытана-пытана пĕр арçын чупать. Эпĕ чарăнсан вăл та хускалмасăр тăрать. Мана çаратас шухăшлă пулнă вăл. Ун чухне вăрă-хурах, выçăпа аптраса çитнĕ çын нумайччĕ. Унччен те пулмарĕ – хыçран икĕ лав килет. Хайхи арçын тĕмсем хыçнелле тапса та сикрĕ. Чиперех ларса çитрĕм. Телей пур çав ман.

Яла кĕнĕ çĕрте милĕк касма каякан пиччĕшне Христана тĕл пулать. «Эсĕ-и ку, Укçине, сана çухалнă теççĕ. Паян Çимĕк, кашни килтех мунча хутнă. Телейлĕ эсĕ», – тет.

Тăвата çул ытла ялта пулман хĕре мĕн пур кўрши-арши, тантăшĕсем сырса илеççĕ. Пурте савăннă. Килте тата йыш хушăннă, ама çури амăшĕн пĕчĕк хĕрпе ывăл пур. Пахчине йĕтĕн акнă. Унăн ĕçĕ вара питĕ нумай. Укçине пĕччĕнех тăрмашать. Тыллать, тĕвет, сўс тăвать... Ашшĕне йĕтĕнрен йĕм çĕлесе тăхăнтартать. Калама çук ĕçчен хĕре килте те, ялйыш та питĕ хисепленĕ.

## Пурнăçран юлман кинеми

Ахаль ларма хăнăхманскер вăрçăран таврăнсанах ĕç шырама пикенет. Чурачăкри типографие наборщицăна вырнаçать. Кайран Кăшнаруйĕнче почта пуçлăхĕнче тăрăшать. Хăйĕн телейне çакăнта тупать Укçине аппа. Инвалид арçынпа паллаштараççĕ ăна. «Пирĕн кил пуш-пушах, пĕрмай çăраççи çакăнса тăрать. Атя сана хам пата пурăнма илсе каятăп», – тет арçын. Ксения Никифоровна качча тухма килĕшет. Канаш районĕнчи Улаксарта кĕçĕн классене вĕрентнĕ Иван Никифорович. Ачаранах хăрах ури типнĕ унăн, çавна пулах вăрçа та илсе кайман.

«Эх, старикĕм, старикĕм! Хура пулсан та лайăх, уксах пулсан та хамăнах», – тесе каланă пĕрмай Укçине аппа упăшкине. Килçуртшăн тăрăшакан мăшăрĕ пĕр ĕçе те тиркесе тăман. Утă çулнă, вутă çурнă. Тĕлĕнмелле ăста платник пулнă. Арăмне кĕтў те кĕттермен. Çумăрта та канман арçын. Ылтăн алăллăскер пĕрмай кăштăртатнă. Сакăр çул каялла вăл ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайнă.

Иван Никифоровичпа Ксения Никифоровна хăйсен ĕмĕрĕнче икĕ çурт лартнă, виçĕ ывăлпа пĕр хĕр çуратса ўстернĕ. Виççĕшне аслă пĕлў панă. Кĕçĕнни Владимир ашшĕ-амăшĕпе юлнă, токарь специальноçне алла илнĕ. Чăваш историйĕпе кăсăкланаканскер хăйсен йăх-несĕлне лайăх пĕлет. Укçине аппан ултă мăнукпа мăнукĕн ачи виççĕ халь. Юратнă асанне, ăш пиллĕ кукамай вăл.

Кĕçĕн ывăлĕпе тата кинĕпе пурăнать Ксения Никифоровна. Лайăх пăхаççĕ ăна. Кинĕнчен халĕччен пĕр сивĕ сăмах та илтсе курман. 90 çулалла çывхарса пыракан Укçине аппана «Шальчакассинчи чи аслă та хисеплĕ хĕрарăм» ятпа чысланă ял уявĕнче.

Паянхи пурнăçран юлмасть кинеми. Радио итлет, телевизор курать, чăваш хаçат-журналĕ çырăнса илет. Нумай нуша курнă хĕрарăм çамрăксене ним уямасăр малалла талпăнма, çирĕп те хастар пулма хистет.

**Елена АТАМАНОВА.**
**Автор сăн ўкерчĕкĕ.**

ХĔРАРĂМСЕН КАНАШĔНЧЕ

Шупашкар

# Театра сусăрсемшĕн те çул уçăлĕ



«Ачалăхшăн, ачалăх ячĕпе» ыр кăмăллăх марафонĕ вăй илни пирки хаçатра çырнăччĕ. Çак эрнере республикăри Хĕрарăмсен канашĕ ЧР сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану, ЧР культурăпа национальноç ĕçĕсен, ЧР информаци политикин тата массăллă коммуникацисен, ЧР пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен министерствисем пулăшнипе Пукане театрĕнче «Ырăлăх хăвачĕ» уяв йĕркелерĕ. Çакăнта пуçтарăннисем юрă-кĕвĕ ытамне лекрĕç. Клоунсемпе иртнĕ тернĕ вăхăт пĕчĕккисен асĕнче юлни иккĕлентермест. Йĕритавра супăнь хăмпăвĕ вĕçрĕ. Унтан артистсем ăнăçсăр çемьесенчи ачасене «Кĕл пике» спектакль кăтартрĕç. Билетсене районсенчи тата хуласенчи хĕрарăмсен канашĕн хастарĕсем, предпринимательсем туяннă. Çав укçана ыр кăмăллăх марафонĕн пухмачне куçарнă та ĕнтĕ. «Унпа Пукане театрĕнче пандуссем тата хăпарткăчсем вырнаçтарăпăр», – тет Хĕрарăмсен канашĕн Ыр кăмăллăх фончĕн председателĕ Лариса Игнатьева. Апла тăк сусăрсем малашне курав залне пĕр чăрмавсăрах кĕме пултарĕç.

«Пирĕншĕн, хĕрарăмсемшĕн, çемье малти вырăнта. Эпир ачасемшĕн пурăнатпăр. Шел те, пирĕн хушăра ăнăçсăр çемьесем, сусăр ачасем пур. Вĕсене патшалăх кăна мар, халăх та ниме майĕпе пулăшасси йăлана кĕчĕ. Ас тăватăр-и, пĕлтĕр сусăр ачасем валли пукане спектаклĕсен фестивальне йĕркеленĕччĕ. Кăçал та пирĕн республикăна Раççейри, чикĕ леш енчи Пукане театрĕсем çĕнĕ ĕçсем илсе килĕç. Черетлĕ фестивале çакăнта йĕркелĕпĕр», – палăртрĕ республикăри Хĕрарăмсен канашĕн ертўçи Ольга Зайцева.

Çавнашкалах республикăри Ашшĕсен канашĕн председателĕ Владимир Викторов, ача прависемпе ĕçлекен уполномоченнăй Вячеслав Рафинов тата ыттисем сăмах илчĕç, уяв пĕлтерĕшĕ çинче чарăнса тăчĕç.

Шупашкарти Хĕрарăмсен мăнастирĕнчи Георгий Орлов протоиерейпа Сергия матăшкă та ăшă çакнашкал тĕл пулу килĕшў тупма, çемьене çирĕплетме, чуна пуянлатма пулăшнине палăртрĕç.

Хĕрарăм предпринимательсем марафон пухмачне 30-шар пин тенкĕ хыврĕç. Чăн та, ырă кăмăллă çын сахал мар пирĕн йышра.

**Мария РОМАНСКАЯ.**

Çĕрпў

# “Урă” йăла-йĕркешĕн




Эрех-сăрапа айкашни инкек патне илсе çитерни такамшăн та паллă. Шăпах çак ыйтăва хускатнă та республикăри Хĕрарăмсен канашĕ Çĕрпў районĕнче йĕркеленĕ "Эпир – çемье урă йăли-йĕркишĕн" форумра.

Унта Çĕрпў район администраци ĕçченĕсем, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем, районти Хĕрарăмсен тата Ашшĕсен канашĕсен ертўçисем, наркологсем, психологсемпе студентсем хутшăннă. Чĕлĕм туртни, эрех ĕçни, наркомани тата токсикомани уйрăм çын хуйхи кăна мар, общество инкекĕ, ăна пĕччен мар, халăхпа кар! тăрсан кăна татса пама май пуррине палăртнă форумра.

Республикăри Хĕрарăмсен канашĕ çак енĕпе вăйсене пĕрлештермешкĕн чĕнсе калать. Ыйтăва татса парас тĕллевпе администраци енчен те тăрăшулăх кирлĕ. Сиенлĕ йăласенчен çавăн чухне кăна хăпма пулĕ. Çавăн чухне кăна пулас ăрусене инкекрен хўтĕлеме май килĕ – палăртаççĕ хĕрарăмсем.

**М.МИХАЙЛОВА.**

АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР



## Икерчĕ хутаçĕ

**400 миллилитр турăх, вĕрекен 200 грамм шыв, 14 апат кашăкĕ çăнăх, 2 çăмарта, 1/2 чей кашăкĕ апат соди, 2 апат кашăкĕ тип çу, 50 грамм услам çу, 1 апат кашăкĕ сахăр, тăвар кирлĕ.**

Çăмартана сахăрпа, тăварпа, турăхпа, çăнăхпа, тип çупа пăтратмалла. Вĕрекен шыва апат соди ямалла. Çак хутăша чустана хушмалла. 5 минутран икерчĕ пĕçерме пуçламалла. Çатмаран илсенех ик енчен те услам çу сĕрмелле. Ăшне тĕрлĕ хутăш хума пулать. Сăмахран, пĕçернĕ чăх какайĕпе суханпа ăшаланă шампиньон çав тери тутлă. Çак хутăша икерчĕ варрине хумалла, айккине симĕс суханпа е çивĕтленĕ сырпа çыхмалла.

## Пулăпа, сырпа

**1 банка тунец, 150 грамм рис, 1 хăяр, пуçлă 1 сухан, 1/2 лимон, 70 грамм сыр, 3 çăмарта, майонез, тăвар, пăрăç кирлĕ.**

Вĕттĕн туранă сухана лимон сĕткенĕпе маринадламалла, унтан пулăпа пăтратмалла. Тăварлă шывра рис пĕçермелле. Хăяра, çăмартана, сыра теркăламалла. Салата сийлесе /рис – сыр – тунецпа сухан – хăяр – çăмарта/ хумалла. Кашни сийе майонез сĕрмелле.

## Треска пĕверĕпе

**1 банка треска пĕверĕ, 2 çĕр улми, 2 çăмарта, 2 апат кашăкĕ консервланă симĕс пăрçа, пуçлă 1 сухан, лимон касăкĕ, тăвар, майонез, укроп кирлĕ.**

Çĕр улмипе çăмартана пĕçермелле. Суханпа укропа вĕттĕн турамалла. Çĕр улмине – тăваткалласа, çăмартана вĕттĕн касмалла. Çимĕçсене майонезпа пăтратмалла. Сĕтел çине лартиччен салата лимон касăкĕпе илемлетмелле.

## Варени кукăлĕ

**2 çăмарта, 200 грамм сахăр, 200 грамм услам çу, 3 стакан çăнăх, 1 чей кашăкĕ апат соди, ванилин, 200 грамм варени, 50 грамм мăйăр кирлĕ.**

Услам çăва сахăрпа, çăмартапа пăтратмалла, апат соди, çăнăх, ванилин хушмалла. Чуста çăрмалла. Ăна икке пайламалла. Пĕрне çатма тĕпне хумалла. Ун çине варени сармалла, мăйăр сапмалла. Çиелтен йĕтĕрленĕ чустапа витмелле. Варени кукăльне духовкăра 30-35 минут пĕçермелле.

## Кишĕрпе, кăлпассипе

**200 грамм кишĕр, 100 грамм сыр, 200 грамм тĕтĕмленĕ кăлпасси, 2 шăл ыхра, майонез кирлĕ.**

Кишĕре, сыра теркăламалла. Кăлпассие пĕрчĕлесе касмалла. Ыхрана вĕттĕн турамалла. Çимĕçсене майонезпа пăтратмалла.

## Пĕверпе пахча çимĕç

500 грамм чăх пĕверĕ, пуçлă 5-6 сухан, 500 грамм кишĕр, 1/2 стакан манна кĕрпи, 1/2 стакан сĕт, вĕтетнĕ сухари, майонез, тăвар, пăрăç, тип çу кирлĕ.

Аш арманĕ витĕр кăларнă пĕвере манна кĕрпипе, сĕтпе пăтратмалла та 1 сехетлĕхе сивĕтмĕше лартмалла. Çурма çаврашкан туранă сухана, теркăланă кишĕре тип çупа ăшаламалла. Çатмана çу ямалла, вĕтетнĕ сухари сапмалла. Суханпа кишĕрĕн çур пайне хумалла, тăвар, пăрăç хушмалла. Пĕвер ямалла, тăварпа пăрăç сапмалла, майонез сĕрмелле. Ăна юлнă пахча çимĕçпе витмелле. Апата духовкăра 1 сехете яхăн пĕçермелле.



# Пахча çимĕçпе чечек акмалли уйăх календарĕ

| Уйăх | Нарăс | Пуш | Ака | Çу | Çĕртме | Утă | Çурла | Авăн | Юпа |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Пахча çимĕç | Акма ăнăçсăр кунсем | | | | | | | | |
| | – | 1-2, 29-31 | 28-30 | 27-29 | 26-28 | 26-28 | 24-26 | 23-25 | 23-25 |
| | Акма ăнăçлă кунсем | | | | | | | | |
| Суханлă чечек | 23, 26-27 | 21-23, 25-27 | 16-19, 20-24, 26-27 | 15-20, 24-25 | 15-17, 21, 24-25 | 13-14, 18, 22-23 | 13-14, 18, 23 | 11,15-16, 20 | 11-17, 21-22 |
| Вăрăллă чечек | 8, 9, 13 | 3-4, 7-9, 12-13 | 3-9, 13-14 | 1-6, 10-13, 30-31 | 1-3, 7-12, 29-30 | 6-10, 31 | 4-6, 28-31 | 1-4, 6, 28-29 | 3-4, 27, 31 |
| Тăрăхла кавăн, патиссон, кавăн | 8-9, 11-13 | 3-4, 7-13 | 3-9, 13-14 | 1-6, 10-13, 30-31 | 1-3, 8-11, 30 | 8-9, 31 | 5-6, 30-31 | 2-3, 6-7, 27-30 | 4, 26-27 |
| Çарăк, тутлă кăшман | – | 20-22, 26-27 | 16-23, 27 | 15-19, 23-25 | 16, 19-20, 24 | 14, 18, 22-23 | 14-15,18-19, 23 | 11, 15-16, 20 | 16-17 |
| Пăрçа йышши культурăсем | 8, 12-13 | 3-4, 7-8, 11-13 | 3-8, 13 | 1-5, 10-12, 30 | 1-2, 7-8, 10-11, 29 | 7-10 | 4-6 | 1-3,6-7, 27-29 | – |
| Çĕр çырли | 8-9, 13 | 3-4, 7-12 | 4-8, 14 | 1-4, 6, 12-13, 30-31 | 3, 12, 29-30 | 7-9 | 5-6, 28-31 | 2-3, 7, 27 | 3-4, 26-28 |
| Купăста | 8, 9, 13 | 3-4, 7-13 | 3-9, 13-14 | 1-6, 11-13, 30 | 2-3, 10, 29 | 8-10 | 5-6 | 1-2, 28-29 | – |
| Çĕр улми | 12-13 | 3, 10-12 | 8-9, 14 | 1-6, 10-13, 30-31 | 1-3, 8-12, 30 | 7-9 | – | – | – |
| Симĕс сухан | 8, 9, 13 | 3-4, 7-9, 12-13 | 3-6, 8-9, 13-14 | 1-2, 6, 30 | 2-3, 11, 30 | 8-9 | 5-6, 31 | 2-3, 7, 29-30 | 3-4, 26-27 |
| Пуçлă сухан | 23, 27 | 20-23, 26-27 | 16-13, 26-27 | 15-20, 23-25 | 16, 19-20 | 13, 17, 21-22 | – | – | – |
| Кишĕр, пастернак | 27 | 20-22, 27 | 16-19, 23, 26-27 | 15-16, 23-25 | 16-17 | – | – | – | – |
| Хăяр, арпус, дыня, куккурус | 8, 9 | 3-4, 7-23 | 3-6, 8-9, 13-14 | 1-6, 11-13, 30 | 2-3, 10-11 | 7-10 | 4-6, 31 | 2-3, 6-7, 27-28 | 7, 26-27 |
| Пылак пăрăç, баклажан | 8-13 | 3-4, 7-13 | 3-5, 8-9 | 1-2, 6, 30 | 2-3, 10-12 | 7-10, 31 | 5-6, 31 | 2-3, 6-7, 27-29 | 3-4, 26-27 |
| Петрушка | – | 7-8, 12-13 | 3-8, 14 | 1-2, 5-6, 12-13, 30-31 | 1-3, 7-9, 10-12, 29 | – | 4-6, 30 | 2-3, 6-7, 29-30 | 4-4, 7, 26-27, 31 |
| Хĕвел çаврăнăш | 11-12 | 12-13 | 3-5, 8-9, 13-14 | 1-2, 6, 11-13, 30 | 2-3, 10-12, 29 | – | – | – | – |
| Редис, йÿç кăшман, дайкон | 22-23, 26-27 | 20-23, 26-27 | 16-22, 26-27 | 15-20, 23-25 | 16-17, 19-21, 24-25 | 17-18, 21-24 | 13-15, 17-21, 23 | 10-11, 14-16, 19-20 | 11-13, 16-17 |
| Салат, шпинат | 8,9 | 3-4, 7-9, 12-13 | 3-9, 14 | 1-4, 6, 10-12, 30-31 | 1-3, 7-12, 29-30 | 6-11, 31 | 2-6, 8-9, 28-31 | 1-3, 7, 29-30 | 3-4, 7, 31 |
| Хĕрлĕ кăшман | 21-22, 27 | 21-23, 27 | 16-22, 26-27 | 15-19, 23-25 | 16-17 | 17-18, 23 | – | – | – |
| Сельдерей | 21-23, 27 | 18-24, 26-27 | 16-23, 26-27 | 15-19, 23-25 | 15-17, 19-20, 25 | 13-14, 17-18, 21-25 | – | – | – |
| Помидор | 8-13 | 3-4, 7-13 | 3-9, 13-14 | 1-2, 3-6, 10-13, 30-31 | 1-3, 7-12, 29-30 | 7-10, 31 | 4-6, 31 | 1-3, 6-7, 27-30 | 3-4, 7, 26-28, 31 |
| Укроп, кинза, сар пăрăç | 8, 9, 13 | 3-4, 7-10, 12-13 | 3-9, 13-14 | 1-6, 10-12, 30-31 | 1-3, 8-12, 29-30 | 7-10 | 4-6, 31 | 1-3, 6-7, 27-30 | 3-4, 7, 26, 31 |
| Хĕрен | 21-23 | 20-23 | 17-19, 21-23, 27 | 15-19, 24-25 | 17, 20-21, 25 | 14, 18, 22-23 | 13-15, 17-19, 23 | 10-11, 15-16, 19-20 | 11-14, 17 |
| Ыхра | 21-22 | 19-22, 25-27 | 16-19, 21-23, 26-27 | 15, 23-24 | 16, 19-21 | 13, 17,18, 21-22 | 13-14, 17-18, 22-23 | 10-11, 14-17, 19-20 | 11-17, 21-22 |

ТУЙĂМ АВĂРĔНЧЕ

# Аннерен хакли никам та çук

Иртенпех ăшталанать паян Марук аппа. Кукăль-пӳремеч пĕçерет, тĕрлĕ салат хатĕрлет. Шетникре сăри те чашкăрса йӳçет, ăна та сĕрмелле. Пĕр самантлăха та канса ларма вăхăт çук. Ара, паян ун пĕртен-пĕр ывăлĕ хуларан яла таврăнать-çке. Çитменнине пĕччен мар, пулас мăшăрне амăшĕпе паллаштарма илсе килет. Кун пек чухне пĕрремĕш хут килекен хăнана пушă сĕтелпе мĕнле кĕтсе илĕн? Амăшĕ ывăлне те çур çул ытла курман. Уншăн тунсăхласа çитнĕ-çке вăл.

Ывăлне пĕччененех ура çине тăратрĕ хĕрарăм. Темĕн те тӳссе ирттерме тиврĕ унăн. Савăнăçне те курчĕ, хуйхи-суйхине те чăтса ирттерчĕ. Йывăр пулсан та пуçне усмарĕ, çынсенчен кая пурăнмарĕ. Ывăлне те ыттисенчен начар мар пăхрĕ. Ăна вăл шеллерĕ те, вăрçрĕ те – аляран вĕçертмерĕ. Сăнаса, асăрхасах тăчĕ. Ялта ят ан кайтăр терĕ. Тĕпренчĕкĕ çумне усал ан çулăхтăр тесе те асăрханчĕ. Пĕчĕкренех тирпее, ырра хăнăхтарчĕ. Ывăлĕ те ун сăмахĕнчен иртмерĕ. Нимĕнле ĕçрен те хăраса тăмарĕ, нихăшне те тиркемерĕ.

Шкулта та лайăх вĕренчĕ арçын ача. Вĕрентекенсем ăна тĕслĕх вырăнне илсе кăтартатчĕç. Спортпа та питĕ туслăччĕ. Ăмăртусенче яланах малти вырăнсене йышăнатчĕ. Паллах, пур енĕпе те лайăх енчен кăна палăрса тăракан ачана пĕрле вĕренекен пуçтахсем килĕштерместчĕç. Ăна кӳрентерме, унран кулма пăхатчĕç. Вăл вара хăйĕн чун ыратăвне пĕччененех чăтса ирттеретчĕ, амăшне каласа кулянтармастчĕ. Пĕрмаях ăна ашшĕ çуккишĕн сăмах тиветчĕ. Анчах çакăншăн ача айăплă мар-çке. Аслисемшĕн пĕчĕккисен явап тытмалла мар. Амăшĕнчен те вăл нихăçан та ашшĕ пирки ыйтман. Вăхăт çитсен юратнă çынни хăех каласа парасса шаннă, ĕненнĕ.

Унăн ашшĕ пирки тĕрлĕрен хыпар пĕлтеретчĕç ăна. Вăл вара никамăн сăмахне те ĕненместчĕ. Пĕрисем ашшĕ вилнине калатчĕç, теприсем урăх çемьепе пурăннине систеретчĕç. Паллах, сывăх çыннине питĕ курас килетчĕ унăн. Килĕнчи кашни сăн ӳкерчĕке тимлĕн сăнатчĕ. Палламан çынсен сăнĕсене нумайччен тинкеретчĕ. Хăшне-пĕрне хăйĕнпе танлаштарса пăхатчĕ. Амăшĕ те туятчĕ ывăлĕ ашшĕшĕн тунсăхланине, анчах вăрттăнлăха уçса пама васкамастчĕ. Унăн иртнине тепĕр хут аса илес килместчĕ...

Шкул хыççăн техникума вĕренме кĕчĕ каччă. Аслă пĕлӳ илме кăмăл тумарĕ. Вун сакăр çул тултарсан кутăнлашса тăмасăр салтака кайрĕ. Икĕ çул тăван кĕтесрен инçетре пулчĕ. Амăшĕпе, тăванĕсемпе çыру урлă çеç калаçрĕ, хыпарсене та çаплах пĕлсе тăчĕ. Салтак тумне хывсан, ялта ĕç вырăнĕ пулманран, хулана çул тытрĕ, завода вырнаçрĕ. Канмалли кунсенче амăшĕ патне килсех çӳрерĕ, хуçалăхра пулăшрĕ. Каярахпа кăна час-часах килсе çӳреймерĕ, командировкăсенче тăтăшах пулчĕ. Ав халĕ те амăшĕ ывăлне çур çул ытла курман.

Марук аппан та пурнăçĕ çăмăл килмерĕ. Шкул пĕтерсен пĕр çул фермăра тăрăшрĕ, ĕнесем сурĕ. Çамрăк хĕре çăмăл пулмарĕ унта. Шуçăмпа пĕрле ферма енне утатчĕ. Утса тени тĕрĕсех те мар, чупса каятчĕ вăл. Усал сăмахпа вăрçăнмастчĕ, вĕрентсе каланине хăлхине чикетчĕ, пурăнан пурнăçра кирлĕ пулĕ-ха тесе картса хуратчĕ. Ăна ялти каччăсем саватчĕç. Вăл вара никама та сывăха ямарĕ, качча кайма иртерех тесе пурăнчĕ. Колхоз ăна зоотехника вĕренме ячĕ. Хула пурнăçĕпе пурăнма тытăнчĕ хĕр. Кун-çулне улăштарчĕ. Марук хăйне ирĕклĕрех туйма тытăнчĕ. Каччăпа та паллашрĕ. Ăнланса та пĕтерейменĕ хĕр, те юратрĕ вăл çав каччана, те вăхăт ирттермелле çӳрерĕ. Кăвак куçлă, сарă çӳçлĕ йĕкĕт çепĕç сăмахсем калама пĕлетчĕ çав, хĕр чĕри ирĕлсех каятчĕ вара. Хăлхаран пăшăлтатнине ĕненсе Марук хĕр ĕмĕрне хуçса хучĕ. Унăн çие юлчĕ.

Институтра вĕренме пăрахса хĕр ашшĕпе амăшĕн килне таврăнчĕ. Ӳпкев сăмахĕ нумай илтрĕ тăванĕсенчен. Хăй çине алă хума та шухăшланăччĕ вăл. Тетĕшĕ вăхăтра ăс паман пулсан Марукăн ывăлĕ çут тĕнчене килмен те пулĕччĕ.

Сывă та тĕреклĕ пепке çуратрĕ Марук. Ăна савса, юратса çитĕнтерчĕ. Ачи аталансан ĕçлеме пуçларĕ, тĕпренчĕкне кукамăшĕпе кукашшĕ пăхрĕç. Шел, ватăсем нумай пурăнаймарĕç, умлă-хыçлăн тенĕ пек уйрăлса кайрĕç пурнăçран. Ун чухне Марукăн ывăлĕ иккĕмĕш класа çӳретчĕ...

Паян Марук аппан кăмăлĕ ырă, чунĕ юрлать. Çав вăхăтрах хĕрарăм сехĕрленсе те илет. Вăл ывăлне ашшĕ пирки каласа пама хатĕрленет. Тахçанхине куçĕ умне тепĕр хут кăларма тивет унăн. Хăйне ывăлĕ ăнланмасран та пăшăрханать. Шалти сасă вара йăлтах йĕркеллĕ пуласса шантарать.

...Тинех кĕтнĕ тĕл пулу саманчĕ çитрĕ. Пӳрт умне такси килсе чарăнчĕ. Пысăк сумкăсем йăтнă Марук ывăлĕпе пулас кинĕ картишне кĕчĕç. Чăтса тăраймарĕ хĕрарăм, çатмине сĕтел çине лартса хирĕç тухрĕ. Ывăлне ыталаса илчĕ, савăннипе мăшăр куçĕнчен çутă тумламсем юхса анчĕç. Палламан хĕре те алă пама манмарĕ вăл.

Çак самантра ывăлĕ çĕр çинче амăшĕнчен хаклă та юратнă çын çук иккенне туйса илчĕ. Унăн амăшĕн ытамĕнчен тухас килмерĕ. Ача чухнехи пек йăпшăнса пырса чĕрçи çине хăпарса ларас, амăшĕн ачаш алли пуçĕнчен шăлнине, çурăмĕнчен лăпканине тепĕр хут туяс килчĕ.

**Александр КУРАКОВ.**

ÇАМРĂКЛĂХ

# Ан парăн, Вика!



Хĕвел шевли Викăпа савăнăçлăн вылярĕ, чылайччен унăн сăнне çутатрĕ. Вăйсăрланнăскерне ăшăтма тăрăшрĕ. Çамрăкăн кăмăлне çĕклес тесе больница палатине сăрхăнса кĕме васкарĕ вăл. «Ан вырт, пырса тăр чӳрече умне – урамра пурнăç кĕрлет. Кур, епле илемлĕ! Хĕлле çитнĕ...» – тенĕн шевле тата хăватлăрах ялкăшрĕ. Вика ăнланчĕ-ши çакна? Хĕр майĕпен тăрса чӳрече патне утса çитрĕ. Чăнах та – хĕлле. Хăш вăхăтра тавралăх юрпа витĕннĕ-ши? Вика çакна сисмен те. Айванскер наркотик серепине çакланчĕ те черчен чечек пек хуçăлчĕ. Темиçе уйăх каялла больницăна лекрĕ. Çак тыткăнран хăтăлма çăмăл мар пулин те шăлне çыртса, юлашки вăйне пухса кĕрешрĕ вăл. Куçĕ умне пулни-иртни тискер тĕлĕк пек тухса тăчĕ.

...Чипер те илĕртӳллĕ Викăн пурнăçра мĕн кирли пĕтĕмпех пурччĕ. Ашшĕ-амăшĕ пĕртен-пĕр ачишĕн нимĕн те шеллемен. Çитĕнсе çитсен çывăх çыннисем юратнă тĕпренчĕкне аслă пĕлӳ илме университета вырнаçтарчĕç. Аслă шкул умне ашшĕ парнеленĕ машинăпа пырса ларчĕ пике. Анчах виçĕ çултан Викăна студент пурнăçĕ йăлăхтарчĕ пулас, çавăнпах вĕренме пăрахрĕ вăл.

Пурнăçне ытлашшипех савăнса-кулса, ытарайми юлташĕсемпе пĕрле каçхи клубсенче ташласа ирттерчĕ хула хĕрĕ. Пĕррехинче шӳтлеме юратакан, пĕр шухăшсăр пурăнакан, пур хĕре те çавăрттарма пултаракан Дениспа паллашрĕ. Ăна пулах Вика наркотикпе туслашрĕ. Малтан чиперкке çакна вăйă пек йышăнчĕ. Анчах кунран-кун пурнăç тĕксĕмленсе, тискерленсе пычĕ. Наркотиксĕр текех пурăнма пултараймарĕ мăнтарăн. Сывăх çынсен укçине вăрлама та именмерĕ. Машинăна сутса ячĕ, ылтăн çĕрĕсене те наркотикпе улăштарчĕ айванскер.

Чылай нушаланчĕ... Халĕ тинех тĕрĕс çул çине тăма хатĕрленет Вика. Больницăра ырă та таса чунлă тухтăрпа Сашăпа паллашрĕ. Вăл хавхалантарнипех пурнăç çутă та тĕрлĕ тĕслĕ курăнма пуçларĕ ăна. Ку чиртен хăвăртрах хăтăлса çĕнĕ пурнăç пуçлассиⅼ – Викăн чи пысăк та çутă ĕмĕчĕ. Çĕнтеретех вăл çак амака. Çакна хăй кăна мар, Саша та ĕненет.

**Кристина АЛЕКСАНДРОВА.**

АХ, АНЧАХ...

# Ĕнерхи савни

Мана ĕлĕкхи савни курасшăн терĕç. Вăл, çурçĕрте хăтлăх тупнăскер, тăван тăрăха килсе çитнĕ. Хăй вăхăтĕнче иксĕмĕр çемье çавăрма палăртнăччĕ. Анчах чун çунтармăш хĕсметрен арăмпа таврăнчĕ. Кайран та ман хыççăн чупрĕ те... Эпĕ ăна, авланнăскерне, яхăнне те ямарăм. Пирĕн ĕмĕт таталчĕ.

Вĕсем ялтан тухса кайрĕç. Эпĕ те мăшăр тупрăм. Кашни сăмаха ăша хывакан упăшка çакланчĕ мана. Хулара хваттер те, çăмăл машина та туянтăмăр. Тĕпренчĕксем те ăна пăхрĕç тата: ĕçчен, ырă кăмăллă, спортпа туслă. Упăшка манпа чĕрре кĕрсе курман. Пушă вăхăт тупăнсанах кухньăна кĕрсе каять те темĕн тĕрлĕ апат пĕçерсе лартать. Çи-пуçне те хăех çуса, якатса тăхăнать. Япала çĕлеме юратать. Хăш вăхăтра ачасем валли çĕнĕ тумтир хатĕрлесе хунине сиссе те юлаймастăп. «Лавккаринчен чылай хитререх кĕпе çĕлесе тăхăнтартăп-ха сана. Хăвна килĕшекен пусма кăна илсе пар», – тет. Юрĕ-çке, ахаль те кашни уйăхра çĕнĕ çи-пуç туянатăп. Апат çинĕ хыççăн савăт-сапа çуса хурать. Тусан шăлать, урай çăвать. Ĕç хыççăн та юлташĕсемпе пĕрле сăра ĕçсе çӳремест. Кĕскен каласан – нимшĕн те ӳпкелемелли çук ăна.

«Ĕлĕкхи савнипе курнăçас килет-и? Паян каçхине вăл сана çурт çумĕнчи кафере кĕтĕ», – кăнтăрлахи апат вăхăтĕнче шăнкăравларĕ пĕрле çитĕннĕ тантăш. Хире-хирĕç ларса калаçни хăна çуртне кĕрсе тухни мар-çке. Çитменнине, хăй тĕл пулу шырать вĕт. Кӳренӳ тахçанах тĕтре пекех сирĕлнĕ. Ĕмĕрĕпех çилĕ тытса пурăнмалла-и? Э, çук вара – ĕнерхи куншăн пăшăрханмастăп.

Ĕçрен маларах тухса илем салонне вĕçтертĕм. «Мĕнле кĕтсе илĕ-ши мана ĕлĕкхи савни? Качча илменшĕн ӳкĕнет-ши? Чечекпе килнĕ-ши?» – кафе еннелле утнă май ун сăнне куç умне кăларма тăрăшрăм. Çамрăклăха каялла таврас килчĕ.

Вăл кафене манран маларах çитнĕ. Галстук çыхман, сухалне хырман, чечек туянман... Мана курсан ура çине тăчĕ те... тепĕр кăлтăк куç умне пулчĕ. Ара, пушмакне те тасатма ĕлкĕреймен. Иксĕмĕр те сĕтел хушшине вырнаçса ларсан официанта чей илсе килме ыйтрĕ.

Лару-тăру çийĕнчех усăмланчĕ. Вăл çемйине пăрахса тăван тăрăха куçса килесшĕн. Кунта йӳнĕрех хваттер тата кивçен укçа шырать. Ăна пĕр эпĕ кăна пулăшма пултаратăп имĕш. Тем каламалла ĕнтĕ ăна? Укçа-тенкĕ ыйтăвне упăшкасăр татса пама май тупăп-и эпĕ? Тĕрĕссипе, килте ытлашши укçа та çук. Перекет кĕнекине пуçтарăннă 500 пин тенкĕпе эпир çĕнĕ автомашина туянасшăн. «Эпĕ сана нимĕнпе те пулăшаймастăп», – вăрах шухăшланă хыççăн тин хурав тупăнчĕ.

«Тен, хутран-ситрен те пулин тĕл пулăпăр? Малтанхи юрату манăçмасть теççĕ-çке. Атя, вырăн çинче усă пултăр хăть санран», – хăйне мăнна хурса калаçрĕ вăл. «Уй, мана сансăрах хытă юратаççĕ», – çухалса каймарăм эпĕ те. Вăл тавлашса тăмарĕ. Чейшĕн тӳлемесĕрех тухса кайрĕ...

**Елена ЦВЕТКОВА.**

## ВУЛАКАН ПУЛТАРУЛĂХĔ

Геннадий ИЗОСИМОВ

# Сарлака сакăн та хĕрри пур...

**/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ иртнĕ номерте/.**

– Манăн тăватă ача ÿссе çитĕнчĕç, ĕçлеме хăнăхаççĕ. Сана пăхса ÿстертĕмĕр, 10 çул усрарăмăр, тумлантартăмăр, çуртна, пахчуна пăхса тăтăмăр, халь ĕнтĕ авланса хăвăр тĕллĕн пурăнма пуçламалла, – хыттăн каласа хурать кил хуçи.

Кун хыççăн Иван ним калама аптранипе йĕрсе ярать. Йăкăнат арăмĕ Ивана хĕрхенет, çав хушăрах хĕре мухтама манмасть.

Йăкăнат Ивана хуçалăхне кайса пăхма сĕнет – хĕле хатĕрленсе мĕн тумалла? Атте аçам сăхманне уртса янă та кайнă. Ури итлемест, пырне тем ларнă пек, хыттăн кăшкăрса йĕрес килет, урамра çынсем пур – аван мар. Тĕтĕмпе хуралса ларнă пÿрт... Çак çуртра çуралнă, çакăнта амăшĕ вилнĕ, улттăра чухне юнашар выртнă çĕртрех ашшĕн чунĕ тухнă. 10 çул хушшинче Иван пĕрре те кĕрсе курман кунта. Паян Иван нимрен те хăраман. Хăвăрт алăка уçнă та пÿрте кĕнĕ, шалтан питĕрсе хунă, тусанлă сак çине выртса йĕрсе янă. Алăкран шаккакан тупăнмасăр та тăман. Йăкăнат тетен ывăлĕ Юман иккен. Каç пуличчен уçăм çинчен лашасене тытса килмелле.

Йăкăнат тете хуçалăхĕнче çамрăк тиха, ватă ăйăр тата çулталăкри тиха пулнă. Аттепе Юман таврăннă çĕре каç та пулнă. Атте çĕрĕпех çыврайман. Епле пулсан та авланассинчен хăтăласси çинчен шухăшланă. Тепĕр икĕ-виçĕ çул тăхтасшăн пулнă.

Ирхине ирех Йăкăнат тете аттене вăратнă, ирхи апатчен иккĕшĕ пÿрт пăхма кайнă. Мĕн тумалла? Пÿрчĕ кивĕ, тайăлнă, улăм витнĕ тăрри шăтса пĕтнĕ, шыв анать. Пÿрчĕ çирĕм-вăтăр çул каялла лартниех. Юлашки вунă çул хушши питĕрĕнсе тăнăскерне пачах юсаман. Хăш-пĕр пĕренине пачах улăштармалла. Пăхса çаврăннă хыççăн тете каланă:

– Кăçал тĕпрен юсаймăпăр – хĕл сăмса умĕнчех. Халь пÿрт тăррине витĕпĕр. Кăмакине юсамалла, стенасемпе маччине, урайне хырса çумалла. Чÿречисене лартмалла, алăкне ашăкламалла.

Тепĕр кун улăм илсе килсе тăррине витнĕ. Кăмакине юсаса тăмпа шуратнă, маччине, стенисене хырса çунă.

Вăхăт питĕ хăвăрт шунă. Пукрав умĕн пĕр эрне маларах Йăкăнат тете сăра юхтарма павара йĕркене кĕртнĕ.

– Халь ĕнтĕ сăра вĕретĕпĕр те туй туса ирттерĕпĕр. Çтаппанпа курса калаçрăм, вĕсем сана килĕштереççĕ, хĕрĕ санпа пĕрлешме хирĕç мар, – тенĕ Йăкăнат. – Ахалех пăшăрханатăн, эпĕ сана начар сунмастăп. Пурте авланса пурăнаççĕ, ачисене ÿстереççĕ, хĕрĕсене качча параççĕ. Эпĕ сана кÿрентерме шухăшламастăп, çулталăкри тихана, кăçалхи тына пăрăва, пĕр сурăхпа путеккине паратăп. Куратăп: эсĕ хуçалăха йĕркелесе яма пултаратăн. Телее, санăн пулас арăму начар мар, сăпайлă. Пурте йĕркеллĕ пулать.

Ку юлашки калаçу пулнă. Тете сăмаха çилпе вĕçтермен.

Тĕлĕнмелле типĕ, ăшă кĕркунне килнĕ. Кĕçех – туй. Хĕр енчен хăнасем вунă-вун икĕ çын килнĕ, йĕкĕт енчен те пурте пуçтарăннă. Авланакан каччă çеç çук. Тăванĕсем пăшăрханаççĕ, пĕр-пĕринчен ыйтаççĕ: каччи ăçта-ши? Йăкăнат тете çиллес. Аттене картишĕнче, сарайра, хăшĕ пахчара çĕр улми аври айĕнче, хăшĕ çырма хĕрринче, мунчара... шыраççĕ. Пăлаки тĕпелте пĕркенчĕк айĕнче куççульпе çăвăнать. Пĕр сехет иртет, иккĕ – нимĕнле хыпар та çук. Сасартăк Марк ывăлĕ Андрей чупса кĕрет те тетене хăлхинчен пăшăлтатать: Ивана тупнă! Улăм купи айĕнчен илсе килсе ампара хупса хунă хайхискерне. Йăкăнат ампара кĕрет. Иван чĕтресе ларать, йĕрет. Калаçма вăхăт çук. Тете Ивана çемçе çĕртен, кăвак тухман çĕртен патаклать.

– Халех çăвăн та тумлан, кĕр пÿрте! Пуринпе те алă тытса тух, тыт стакан, тултар пыллă сăра, Пăлаки патне пыр, сывлăх сун. Малтан хăв ĕç тĕппипе, унтан Пăлакие пар. Хăнасене малтан – арçынсене, унтан хĕрарăмсене. Тепре тарса пытансан шыраса тупатпăр та мĕн пур хăна умĕнче пиçиххипе хĕнетĕп, ăнлантăни?

Атте нимĕн те чĕнмен. Лайăх çăвăнса шăлăннă, шăлаварне тасатнă, кĕпине тăхăннă, çÿçне туранă, çĕнĕ çăпата сырнă. Пăртак шыçăннă куçпа пÿрте кĕнĕ. Тете каланине пурне те тунă. Туй хăйĕн йĕркипе пынă, юрланă, ташланă, кулнă, шÿтленĕ. Хăнасене ĕçтернĕ, калаçнă...

Ирхине тул çутăлас умĕн кăна саланнă хăнасем. Хĕр икĕ кун йĕнĕ хыççăн сасăсăр тăрса юлнă. Тăванĕсемпе уйрăлнă чухне те нимĕн те калайман. Туй вĕçленсе пынă май чăваш йăлипе Иванпа Пăлакие хĕве хупнă. Пĕрле выртса çывăрас вырăнне тата хытăрах макăраççĕ иккĕшĕ те: атте – ирĕксĕр авлантарнипе, Пăлаки – Иван йĕнипе.

Туй хыççăн виçĕ кунран, Пукрав эрнин пĕрремĕш кунĕнче, Йăкăнат тете çывăх тăванĕсен умĕнче манăн пулас аттепе аннене саламланă. Çулталăкри тиха, сакăр уйăхри тына пăру, пĕр сурăха путеккипе пĕрле парнеленĕ. Иванпа Пăлакие хура пÿрте ăсатнă. Аттепе анне – çамрăк мăшăр – хăйсен япалисене, парнеленĕ пурлăха куçарнă. Çĕнĕ картара, палламан вырăнта, тиха, пăру тата сурăхпа путек кĕтесрен кĕтессе чупнă, кĕçеннĕ, макăрнă. Иванпа Пăлаки пÿрте кĕнĕ те татах куçĕсем шыçăнса кайиччченех йĕнĕ. Анчах ниçта та кайма çук – килĕшмеллех. Выльăха та шел. Тихапа сурăх пăртак шыв ĕçсен лăпланнă, пăру шыв патне пыман. Пăлаки пÿртрен çăкăр татки илсе тухнă, çăкăр çисен çеç лăпланнă хайхи.

Кĕрхи кун лайăх тăнипе усă курса хĕле хатĕрленме тытăннă. Тихапа пăрăва хупма пÿрт çумне çатанран, шĕшкĕ тураттисенчен авса икĕ пайлă карта тунă, ăна тăмпа шăлса тухнă, тăррине çĕр улми аврипе витнĕ. Пÿрте шалтан тепĕр хут тасатса кăларнă. Мал енне кутник сакки вырнаçтарнă. Чÿречисене кĕленче куççем лартнă. Çурт йĕри-тавра тислĕк тăкнă. Çамрăксемшĕн кÿршĕсем та савăннă. Иванпа Пăлаки кунпа çеç лăпланса ларман, хăйсен хушшинче калаçнă – кăçаллăха хĕл каçăпăр та çитес çулла хамăр вăйпа пÿрте тĕпрен юсăпăр, кăмакана пăсса çĕнĕрен çавăрăпăр, мăрьеллĕ тăвăпăр. Сайра сивĕ пулакан хĕл çав çул шатăртаттарнă кăна.

Пÿрт те, кăмаки те начар. Улăмпа тата çĕр улми аврипе, çапăпа кăна хутмалла: вутă çук. Выльăхсене те ăшă витесĕр сивĕ. Иванпа Пăлаки нумай нушаланнă. Ирех тăрса кăмака хутнă. Малтан тихана пÿрте кĕртсе апатлантарнă, унтан – пăрăва, сурăхпа путеккине. Пурне те пĕрле кĕртме пÿрчĕ пĕчĕк. Вĕсене кĕртсе апатлантарнă çĕре сивĕнсе те каять...

Иван пĕчĕк çуна туса хатĕрлет, кивĕ хăмăт-сÿсмен, йĕнерчĕк тупать те тихана кÿлме хăнăхтарать. Çуркунне ака вăхăтĕнче хăйсен анине сÿрелет. Тырă акса хăварать. Вăрлăхне Йăкăнат тетĕшĕ парса пулăшать.

Иван вăрах лăпланаймасть. Арăмне ятран чĕнмест. «Эй, шыв илсе тух!» «Эй, кĕл илсе кил», – тет. Каярахпа, чăн та, чиперех калаçма тытăнать, çапах арăмне мĕн виличченех ятран чĕнсе курмасть. Кĕркунне, палăртнă пек, пÿрт тăррине сиреççĕ, пĕренисене сÿтсе çырмана турттараççĕ. Тĕтĕмпе хуралса хытса ларнăскерсене хырса çуса тасатаççĕ те каялла турттарса килеççĕ. Çĕрĕк пĕренисене çĕннисемпе улăштарса купалаççĕ. Виçĕ чÿрече пысăклатса касаççĕ, çĕнĕрен кăмака купалаççĕ, мăрьеллĕ тăваççĕ. Çавăн пекех çенĕк те майлаштараççĕ. Кивĕ хăма тупса тăррине витеççĕ. Кивви çумне çĕннисене хушса ăшă вите купалаççĕ. Кил картине те йĕркене кĕртеççĕ. Çакăн пек йывăр ĕçсене çу каçипе иккĕшех, пĕр ăста тытмасăрах, туса пĕтереççĕ. Ирхине тĕттĕмле тытăнса мĕн каç пуличчен пĕр канмасăр ĕçлеççĕ.

Пĕрле пурăнма пуçланăранпа тăватă çултан Пăлаки пĕрремĕш ачине çуратать – ывăл. Йывăр пурнăçа пула пепкине йĕркеллĕ пăхма та май килмест. Александр вĕçĕмсĕр чирлет. Çапах Пăлаки тепĕр ача та çуратма шухăшлать. 1910 çулта тĕнчене хĕр ача Лида килет.

Çапла майлашăнса пынă пурнăç...

## СĂВĂ СĔВЕМĔ

# Ыра çыннăн ĕçĕ ăнать

**Чăваш патшалăх университетĕнчен вĕренсе тухсан Патăрьел районĕнчи Нăрваш Шăхаль шкулĕнче пĕрремĕш утăмсем тунăскер 1989 çулта Пăлапуç Пашьел йĕкĕтне качча тухнă та çак ялтах ĕçлеме пуçланă. Чăваш чĕлхипе литератури вĕрентекен Светлана Никитина çын кăмăлне тупма пĕлет, кашни ачан чун туртăмне туйса унăн шалти вăйне аталантарма тăрăшать. Хушнă ĕçе яланах тÿрĕ кăмăлпа пурнăçлама ăнтăлнăран ĕнтĕ ăна 1995 çултанпа шкул директорĕн тивĕçне шаннă. Ĕçрен кăшт пушансанах алла киçтĕк тытма юратать вăл, сăвăсем те шăрçалать. Ÿкерес-çырас туртăмĕ тăван ашшĕнчен юлнă-тăр тесе шухăшлать, ăна хăйĕн пĕрремĕш вĕрентекенĕ пек хаклать. Петр Иванович Семенов ылтăн алăллă пулнă, йывăç каскалама, кăмака купалама ăстаскер çĕвĕç ĕçне те тиркемен, районти ачасене те кăсăклантарма пĕлнĕ. Унăн ĕç хатĕрĕсене, вăл капăрлатнă йывăç куркасене, сăмавара хĕрĕсемпе ывăлĕсем халĕ хаклă тупра пекех типтерлĕ упраççĕ.**

**Пĕрремĕш хайлавĕсем «Авангард» райхаçатра кун çути курнăран – редакци ĕçченĕсене, университетра чылай пулăшнă Виталий Станъяла, Петр Яковлева, чăваш чунĕллĕ пулма хавхалантарнă ытти преподавателе чĕререн тав тăвать.**

**– Телей тенине кашни хăйне май ăнланать. Пĕри кÿрши тулăх пурăнма ăнтăлнине ăмсанать. Телей, тен, чун-чĕре лăпкăлăхĕ, чун нимĕн пирки те пăшăрханманни, ăш вăркаманни. Пурнăç йĕркеллĕ шусан, ĕç кал-кал пырсан çын хăйне лăпкă туять. Çакă мар-ши телей?**

**Шăпах ăшра лăпкă чухне сăвăсем хăвăрт çырăнаççĕ. Ман шухăшпа, ырă кăмăллă çынна çĕр çинче пурăнма та çăмăлрах, унăн ĕçĕ те ăнсах пырать пек, – чунне уçать ăста педагог.**

**Светлана Петровна ачасене те асамлă Парнас тĕнчине илĕртме пĕлет. Çырас туртăмлисене сăвă техникине вĕрентет, сĕнÿ-канаш парать. Пăлапуç Пашьел шкулĕн хастарĕсем тĕрлĕ конкурса хаваспах хутшăнаççĕ, чылай чухне çĕнтерÿçĕ ятне тивĕçеççĕ.**



**Геннадий ВЕРБЛЮДОВ сăн ÿкерчĕкĕ.**

Светлана НИКИТИНА

## Парăм

Ача чухне эс пулнă шухă,
Тăваттăнччĕ пĕр вĕçĕм
Переттĕн те кайăксене,
Чунтан шеллеттĕм вĕсене.
Йăмра çине те улăхаттăн,
Йăвасене шав аркататтăн
Кил-çуртсăр юлнă кураксен
Хуйхи мĕн пысăкăш – сисмен.
Мĕн тунине шута илмесĕр,
Пурне те нимĕн шеллемесĕр
Йĕртеттĕн те эс çĕмĕреттĕн,
"Ĕçÿ" ăнсан пит хĕпĕртеттĕн
Çулсем иртейрĕç сисĕнмесĕр,
Ачалăх тарнă ту хыçне
Иртнисене аса илмесĕр
Çын пурăнмасть пуль çĕр çинче
Сана курсан халь хĕпĕртерĕм,
Курма килсессĕн пĕринче
Лартаттăн йывăç эс чиперрĕн
Айтуш çырмин пĕр хĕрринче
Хĕвел савса çÿлтен сăнатчĕ,
Юрлатчĕç кайăксем ĕлккен.
Туту хĕрри те йăл кулатчĕ –
Хăв парăмна манман иккен
Айван ачалăхăн çул-йĕрĕ
Тухать-тăр вăхăт иртнĕçем,
Ун чух вара тĕрлетпĕр тĕрĕ
Тем тĕрлĕ шухăш çиппинчен
Кашнийĕн пур-тăр пысăк парăм
Тăван тавралăх умĕнче.
Çавна туйсан кăна пултарăн
Хăвна телейлĕ çын теме.

## Çуралнă кун

Ак кĕркунне шаккарĕ кантăкран
Парни асамлă – сарă ылтăнран
Вĕçеççĕ те ташлаççĕ çулçăсем,
Куç умĕнче – ытарайми илем!
Çÿл тÿпере кикак хур кайăксем.
Кĕтеççĕ вĕсене таçти çĕрсем.
Сулатăп аллăма эп темĕнччен,
Туссем куçран инçе çухаличчен.
Палланă кĕр сăнарĕ ман умра.
Кăвар сапать пилешĕ пахчара
Çак илеме ярас килмест куçран,
Çуралнă кун, туссемĕр, ман паян.
Сисместĕн те, иртет çул хыççăн çул.
Чуна ан пустăр нихăçан та чул.
Ним усăсăр ан ирттĕрччĕ кун-çул,
Кĕрхи асам, ман чун илемĕ пул!

# Кĕрлесе иртнĕ ĕмĕр



**1857 çулхи пуш уйăхĕнче Римра пурăнакан вырăссен хушшинче пăлхану çуралнă. Çĕнĕ хыпар чи малтанах Ĕмĕрхи хулана стажировкăна пынă çамрăк ÿнерçĕсене вырăнтан хускатнă, вĕсем Виколо-дель-Вантаджо урамне çул тытнă. Вĕсем хыççăн аристократсем туртăннă. 5-мĕш çурт умне лаша кÿмисем пыра-пыра чарăннă. Александр Иванов ÿнерçĕ, 27 çул хушшинче Римра чапа тухма ĕлкĕрнĕскер, хăй çак вăхăтра пĕр чарăнми ĕçленĕ картинине вĕçленине пĕлтернĕ. Тĕрĕссипе, ĕç ăнăçасса никам та шанман. Ун пирки пурте ăсран тайăлнă тесе шухăшлама пуçланă-ха та... Вăл тем пысăкăш картина калăпланă. Ăна кунсерен якатнă... çапла çул хыççăн çул иртнĕ. Çавна май ÿкерчĕк пахалăхĕ чакса кăна пынă имĕш. Çÿллех мар, мăк сухаллă Иванов, кĕске алăллăскер, кивĕ пальто-шăлаварне хывманскер, хура куçлăхсăр, туясăр урама тухманскер, сехет пек çÿренĕ. Яланах пĕр кафере апатланнă – ытти çĕрте тăшманĕсем ăна наркăмăш параççĕ тесе шухăшланă. Хăй яланах апатланакан кафере вара пĕр официанта кăна шанман. Тепĕр чухне ÿнерçĕ килтех çинĕ. Апат пĕçерме шыв çывăхри фонтанран илнĕ, типĕ çăкăр чăмланă. Çакă укçа пулманнипе çыхăннă-ши е каллех тăшмансемпе, калама хĕн, анчах та хулара пурăнакансем Иванов пуçĕнче таракансем тахçанах йăва çавăрнине ĕненнĕ...**

### Алăк уçăлнă

Акă кĕтменлĕх – алăк уçăлнă! Хăнасене пачах урăх Иванов кĕтсе илнĕ. Картинине курсан вырăс ÿнерçисен çăварĕсем карăлнă – тĕлĕнмелле аван пулса тухнă! Чăн та, вăхăт иртсен "Явление Христа народу" ĕçе критиксем тиркесе пĕтереççĕ. Сывлăш сахал имĕш, çут çанталăк вилĕ, ÿкерчĕк хăй пĕтĕмĕшле – гобелен... Усал чĕлхесем вăрах лăпланаймаççĕ. Анчах Иванов ĕçе вĕçленĕ ĕнтĕ, халăх умне кăларнă. Ăнăçăва унран халĕ ним тусан та туртса илеймĕн.

Вырăс аристократийĕ хыççăн мастерскойне акăлчан, нимĕç, француз ÿнерçисем туртăннă. Вĕсем пурте 5-мĕш çурт умĕнче кĕпĕрленнĕ, иккĕмĕш хута хăпармашкăн черет тăнă. Хăнасен ури айĕнчи пусма кĕç-вĕç йăтăнса анас пек авăннă. Кун пек чап пирки пур ÿнерçĕ те ĕмĕтленет хăйĕн пурнăçĕнче! Калас пулать, Рима стажировкăна лекни хăех ăнăçу шутланнă. Вырăссем унта та хăйсене шавлă тытнă. Вăхăта ытларах музейра мар, кафере ирттерме кăмăлланă. "Хăйсеннисене" шыраса тупсан – темиçе хутлă усал сăмах янăраса кăна тăнă – вĕсен сĕтелĕ патне пурте пухăннă. Раштав уявне вырăссем анлă паллă тунă. Мăн кунра сĕтел хĕрлĕ çăмартапа тулнă, çăварнире – икерчĕпе. Вырăссем уявра çĕр-шыв гимнне юрланă, ура çине тăрса патша сывлăхĕшĕн черкке çĕкленĕ. Александр Иванов кун пек ушкăнсенчен айккинерех пулма тăрăшнă...

### "Тĕрĕс" ача

Тĕрĕссипе, ку Петербурграх пуçланнă. Андрей Иванович Иванов профессор ывăлĕ юлташĕсемпе хутшăнма питех юратман. Аташман та. Кĕсьери укçине ахаль тăкакламан. Хутсăр, кăранташсăр, сăрăпа киçтĕксĕр пуçне ăна урăх нимĕн те кăсăклантарман тейĕн. Тулли кĕлеткеллĕ ачана юлташĕсем вăçĕмсĕр вăрçтарма хăтланнă, анчах пĕчĕк ÿнерçĕ картран та вĕçерĕнмен, куççуль те кăларман.

...Профессор черетлĕ хут Ивановăн ĕçне мухтанă. Арçын ачан айăкне çакăн хыççăн – черетлĕ хут – майра йĕппи тирнĕ. Лешĕ каллех ахлатса илнипех çырлахнă. Пансионатра ачасене начар çитернĕ, лайăх тăхăнтартман. Вĕсен хушшинче Иванов, килте пурăнаканскер, тулли питлĕскер, хитре тăхăнаканскер, тÿрех палăрса тăнă. Ăна çакăншăн каçарайман. Вĕренсе пĕтернĕ çĕре те Саша юлташ тупайман. Унăн пысăк ĕмĕчĕ пирки те, паллах, никам та пĕлмен. Ашшĕ, паллă ÿнерçĕ Андрей Иванович, çемьене выçă лартман. Академире вĕрентнĕшĕн лайăх тÿленĕ. Унсăр пуçне Ивановасли ытларах мифологипе тата тĕнпе çыхăннă картинăсем ÿкернĕ. Ку енĕпе саккас тупăнсах тăнă. Çапла Ивановсен килĕнче турăшсен хыçĕнче вунă тата çĕр тенкĕлĕххисем хушăнсах пынă. Ÿнер академийĕн профессорĕ Иванов ачин чунĕнче мĕн пулса иртнине кăна пĕлмен – Саша "картинăсен картинине" ÿкерме ĕмĕтленнĕ: тен, шăпах вăл тĕнчене улăштарма пултарать...

### Ултă кун та ултă каç...

Çÿçне кĕскен кастарса çÿрекен 14-ри ачан пуçĕнчи шухăшсенчен Мускав университечĕн профессорĕ те вăтанмĕччĕ – Саша искусство тĕнпе танлашасса шаннă, художниксем тĕнчене лайăх енне улăштарма пултарасса ĕненнĕ. Çамрăк ватă ÿнерçĕсен пултарулăхне тĕпчеме ĕмĕтленнĕ. Вара вăл вĕсенчен те чаплăрах картина ÿкерĕ. Çынсем ăна курĕç те улшăнĕç – усаллисем ырăрах пулĕç, пуяннисем мулĕсене чухăнсене валеçсе парĕç, икĕ питлисем тĕрĕслĕхпе туслашĕç. Ача чухне, чăн та, нумайăшĕ хăйне паллă çар ертÿçи, вăйлă улăп пек курать. Анчах та çулсем иртнĕ майăн, ÿссе çитсен, юмах вĕçленет. Александр Иванов вара ĕмĕчĕпе сыв пуллашма шухăшламан та. Тĕлĕнмелле, вăл туслă çыхăну йĕркелеме те, хĕрсем хыççăн чупма та пĕлмен. Çапах та академи çăлтăрĕ пулнă. Икĕ ĕçшĕн пĕчĕк тата пысăк ылтăн медальсене тивĕçнĕ. Ÿнерçĕсен обществи ăна Италие стажировкăна ярать. Пăрахутпа кайма билет кăна туянмалла. Çак самантра Александр пĕрремĕш хут... юратса пăрахать. Ĕнтĕ ĕмĕчĕ çинчен те, Итали пирки те манать. Гюльпен, академире музыка вĕрентекенĕн хĕрĕ, чухăн пулнă. Вĕсем Раштав уявĕнче паллашнă. Ултă кун асапланнă каччă. Ултă каç тĕлĕкре пикепе аташнă. Çиччĕмĕш кунне, сăлтав тупса, хĕр пурăнакан çурта пынă, ыттисем сисиччен пикене çыру тыттарнă. Унта туйăмĕсем пирки систернĕ. Пĕтнĕ чĕре, арканнă! Уйăхран вĕсем Çуллахи садра тĕл пулнă. Якăлти те чее пике каччăна тÿрех çавăрса илнĕ – уншăн çăлăнăç пулнă-çке вăл. Каччă ашшĕ-амăшне туй пирки пĕлтернĕ. Гюльпен ĕмĕчĕ пурнăçланнă тăк Александр Иванова паян никам та пĕлместчĕ. Юрать-ха профессор хушша-хуппа кĕнĕ. Вăл ывăлĕн пуласлăхне урăхларах курнă. Пултарулăхĕ те, тăрăшулăхĕ те пур – стажировкăран таврăнсан Саша çав вăхăтра модăна кĕрсе пыракан Брюлловран та иртерĕ. Чапа тухĕ. Пуйĕ те лайăх çемьерен арăм илĕ, хĕр туприллине.

Сашăна ашшĕ-амăшĕ икĕ эрне ÿкĕтленĕ. Амăшĕ макăрнă. Ашшĕ хăйне шеллеме ыйтнă – ватăлнă ĕнтĕ, куçĕ курмасть, алли те пăхăнасшăнах мар. Саша вĕсене пăрахсан выçсах вилеççĕ. Юлашкинчен арçын хăйĕн сăмахĕсене хăй те ĕненнĕ, куçĕнчен куççуль тухнă. Ăна кура ывăлĕ те кăмăлне чарайман, икĕ арçын ыталашса илнĕ. Саша Гюльпен патне сыв пуллашса çыру çырнă. Кĕçех каччă çула тухнă, ывăлне ашшĕ-амăшĕ тутăр сулсах ăсатнă. Ăна юлашки хут курнине вĕсем шухăшлама та пулатрайман. Андрей Иванович мăнукĕсене те, ывăлĕ чапа тухнине те кĕтсе илеймен. Профессор парса хăварнă пилĕк пин тенкĕпе Саша тата темиçе çул пурăннă Римра. Çак тапхăрта шав пĕр картинăпа ĕçленĕ...

### Тутăр, çĕмрĕк тетте

Ун чухне вара, 1830 çулта, ку тапхăр пирки никам та чухлама та пултарайман. Саша çул тăршшĕпех Гюльпен пирки шухăшланă. Кайран та вăл çырусенче тăршшĕпех ун пирки ыйтать. Анчах та хĕр ăçта кайса кĕнине никам та "пĕлмест"... Иванов умĕнче тĕнче уçăлать: Дрезден, Флоренци, Венеци, Рим, Леонардо да Винчи, Рафаэль, Караваджо... Александр Иванов пĕр хуларан теприне куçать, вырăнти çынсемпе, чĕлхе пĕлменнине пула, пÿрнесем кăтартса хутшăнать, перекетлеме пĕлмест, ăна кахал çын кăна улталамасть. Ĕмĕт хыççăн хăваласа çапла 27 çул иртет. 1857 çулта Александр Иванов киле таврăнма шухăшлать. "Явление Христа народу" ĕçе Петербурга ăсатма хатĕрлеççĕ. Ÿнерçĕ япалисене пуçтарма тытăнать. Çĕтĕк пушмакĕсемпе сăрăпа вараланнă курткăсем çÿп-çап ешчĕкне вĕçеççĕ. Иванов Парижра çĕнĕ япаласем саккас парать – фрак, шурă жилет, шăлавар... Çуртра мĕн пурри йăлт çÿп-çапа çаврăнать. Шкапра арçын аллине йÿнĕ духи шăрши кĕрекен тутăр тата çĕмрĕк тетте лекет. Иванов хăйĕн мастерскойĕнче сакăр çул хуçаланнă хĕрарăма тата хăйĕн пĕртен пĕр хĕр ачине аса илет.

### Ĕмĕт тарсах пынă

Ку истори ытти художникăннинчен нимĕнпе те уйрăлса тăмасть – ÿнерçĕ натурщицăна куç хывнă. Неаполь 19-ти хĕрĕ Римра пурăнакан тăванĕ патне куçса килнĕ, лавккана ĕçе вырнаçнă. Тереза ÿнерçĕсем патĕнче ĕçлесе те качча тухмашкăн хĕр тупри валли укçа пухнă. Вăл вăхăтра Иванов та ытти ÿнерçĕрен питех уйрăлса тăман, хупаха çÿренĕ, эрех ĕçнĕ..."Явление воскресшего Христа Марии Магдалине" ĕçшĕн живопиç академикĕн ятне тивĕçнĕ. Ун хыççăн профессор картлашки те инçе мар: апла тăк – лайăх шалу, пенси... "Явление Христа народу" вара мастерскойăн иккĕмĕш хутĕнче выртнă.... Каярахпа Терезăн çие юлнă, хĕрарăм Неаполе таврăннă. Иванов ăна хырăм пăрахма хушнă. Темиçе уйăхран амăшĕ пĕчĕк ачапа таврăнсан арçын питĕ хытă тарăхнă. Вăл пепкене урăх çĕре илсе кайма хушнă. Тереза та кăмăлне ирĕке янă – апла ача ашшĕ вĕсене урăх кураймĕ. Çапла амăшĕпе хĕрĕ мастерскойĕнчех юлнă. Виçĕ çынна пурăнмалăх укçатенкĕ аран-аран çитсе пынă. Картина çÿлти хутра хăйĕн пурнăçĕпе пурăннă. Иванов унта хăпарсан хăй хыççăн алăка çăрапа питĕрнĕ – айван хĕрарăмпа ачин çветтуй вырăнта мĕн тумалла? Мастерскойĕнче художник çурта çутнă, сăрă хатĕрленĕ, сывлама пăрахнă та... ĕнер мĕн ÿкернине йăлт улăштарма пуçланă. Ĕмĕт тарсах пынă... Ĕçĕн вĕçĕ-хĕрри те курăнман. Уйăх хыççăн уйăх, çул хыççăн çул иртнĕ. Тереза самăрăлса, хĕр ача ÿссе пынă. Каярахпа асамлă ĕç пулса иртнĕ. Юлташĕ Гоголь ăна Апраксинсем патне илсе пынă. Иванов вĕсен хĕрне Машенькăна юратса пăрахнă. Арçын – çамрăк мар, мăран, чухăн. Хĕр – çапçамрăк, пуян, ун тавра арăслансем явăнаççĕ... Машенька та ăна юратнине Иванов хăйне хăй ĕнентерет. Ăна арăмĕн ролĕнче курать. Ку хĕр ун валли маррине ĕнентерме тăнă Гогольпе яланлăхах хирĕçет.

Апраксинсен виллинче хăналаннă чух Иванов çĕтĕк пушмакне сĕтел айне пытарать, кивĕ пиншакĕн чавсине курка хыçĕнче тытать. Машенька çине пăхма та хăяймасть. Ку вăхăтра Терезăпа Мариуччи текех Ивановпа пурăнман ĕнтĕ. Арçын хĕрарăма вăрра тытнă – Ивановăн плащĕпе перчетки çухалнă имĕш. Хĕрарăмпа ачи тухса кайнăранпа икĕ эрне иртсен çухалнă япаласем тупăннă. Ивановăн çеç çавна пула совеçĕ шарламан. Хăй ку килте ытлашши пулнине туйса илнĕ пулас хĕрарăм. Унпа тата хĕр ачипе мĕн пулнă малашне – арçын çакăнпа нихăçан та кăсăкланман. Кĕçех хыпар сарăлнă – Апраксинсен хĕрне Мещерский кнеç çураçнă. Иванов çакна илтсен апат-çимĕç, юлташĕсем çинчен мансах икĕ эрне ниçта тухмасăр ĕçленĕ. Çăвăнасси-хырăнасси те асне килмен.

### Тиркеççĕ-и? Тиркеччĕр!

...Алăра çĕмрĕк тетте тытса ларнă чух ÿнерçĕ пуçĕнче çĕр тĕрлĕ шухăш явăннă. Юлташĕ Григорий Лапченко тахçанах Кальдони хĕрне качча илнĕ. Каярахпа арçын суккăрланнă, халĕ ăна арăмĕ пăхса пурăнать. Мăшăр хăйне пур пĕр телейлĕ туять. Вăл вара йăлт çухатрĕ... Картина пирки те авă темĕн калакан та пур...

Тиркешекенсене хирĕç нимĕн те каламасть Иванов. Пуринпе те килĕшет. Çапах та унăн ĕçне пысăк хак паракансем усал чĕлхеллисенчен ытларах. Ÿнерçĕ нумай çул пĕр япаланах темиçе хут пăсса тÿрлетнине пурте тенĕ пек илтнĕ ĕнтĕ. Юлашки вăхăтра вара вăл ĕçне никама та кăтартман, хăй те çынран пытанса пурăннă. Раççейрен килнĕ шăллĕне те киле кĕртмен. Сергей Иванов алăкран вăрах шаккаса тăнă. "Кам эсир? – кăларнă пуçне тăрмаланчăк çÿçлĕ арçын. – Ан улталăр, манăн шăллăм ача кăна-ха..." Каярахпа кăна тавçăрса илнĕ – вĕсем уйрăлнăранпа ĕмĕр тенĕ пек иртнĕ ĕнтĕ. Иванов алăка уçса янă, шăллĕне ыталаса илнĕ.

Мĕн пулнă? Мĕншĕн çапах та нумай çул пытарнă хыççăн ÿнерçĕ ĕçне халăх умне кăларнă? Сăлтавне Александр Иванов хăй те ăнланман. Çакна кăна сиснĕ – вĕçĕ çывхарать. Унăн ури тытми пулса пынă, кăмăлĕ пăтраннă. Пăтранни сăлтавне вăл тăшмансемпе çыхăнтарнă-ха – вĕсем ăна наркăмăш парсах тăнă. Чи хăрушши çакă пулнă – арçын хăй никама та кирлĕ маррине туйнă. Йĕри-тавра пурнăç кĕрленĕ, урам ача-пăча хавăслă сассипе тулнă, хĕрарăмсем йăл кулнă. Унăн кăна чунĕ вилĕ. Тен, тăван кĕтесе таврăнса чĕрĕлĕ?

### Килте...

Иванов Раççее Европа урлă таврăнать. Анчах та Петербург та ăшшăн кĕтсе илмест. Ашшĕ-амăшĕ те, йăмăкĕ те вилнĕ. Пĕлĕшсене шăпа тĕнчипех салатнă. Александр Иванов фрак тăхăнса Ÿнер академийĕн президенчĕ Мария Николаевна патне каять. Княгиня, патша тăванĕ, чаплă картинăна курнăскер, ĕçшĕн нумай тÿлессине калать.

Йăлт тĕлĕкри пек пулса иртет. Картинăшăн вунă пин шантараççĕ. Кĕмĕлпе. Е сакăр пин тата пенси... Император ăшă сăмахпа хавлантарать.

1858 çулхине министерствăран пĕлтереççĕ – ĕçе вун пилĕк пинлĕх хакланă. Кăмăллă хыпара илтет-ха ÿнерçĕ, анчах та савăнса ĕлĕреймест – унăн ури пачах тытми пулать, вăл персе анать. Нумайăшĕ Иванов холерăпа чирлесе вилнĕ теççĕ. Анчах та юлташĕсем пĕлеççĕ, шăпаран тараймăн: Римра аптранă чирех çулать Иванова – ури тытмасть, пуçĕ çаврăнать, кăмăлĕ пăтранать. Мĕн курнă-ши вăл юлашки самантра? Тереза куççульне-ши е ачашланма хăтланакан Мариуччăна-ши? Тен, тутăр сулакан ашшĕ-амăшне?.. Пурнăç мĕнле кĕрлесе иртни сисĕнмен те. Александр Иванов çакăншăн пăшăрханман – вăл пĕлнĕ: унăн картинисем пурăннă чух вăл хăй те чĕрĕ...

**/«Караван историй»/.**





– Алло! Атте! Мана машинăпа килсе ил-ха!
– Çук вара!
– Мĕ-ĕ-ĕншĕ-ĕ-ĕн?
– Ара, эсĕ ĕнер тĕлĕнмелле хаклă пушмак вăйпах туянтартăн вĕт-ха! 15 сантиметр çўллĕш кĕлеллĕскер питĕ меллĕ терĕн, туйăнмасть те имĕш... Вăт ут вара халь... Хитре ут, хитре...

* * *

Çур çĕр иртни виçĕ сехет. Алăкран шăнкăравлаççĕ.
– Уй, кам унта?
– Хваттер çаратакансем!
– Уй, мĕн кирлĕ сире?
– Ылтăн!
– Нумай-и?
– 100 килограмран сахал мар!
– 158-па çырлахатăр-и?
– Юрать, пар атя кунта!
– Сашук, чунăм, ылтăнăм, тăр, сан патна килнĕ...

* * *

Хĕрарăм начарланма тĕв тунă. Хайхи ăçта май пур – çавăнта çўреме пуçланă: фитнес, бассейн, хор... Хор тата начарланма мĕнле пулăшать тетĕр-и? Пулăшать-и е çук-и, пĕлтерĕшлĕ мар – апат çиме кăна вăхăт ан пултăр...

* * *

Турагентствăра телефон шăнкăртатать:
– Канма каяс кăмăл пур та...
– Укçăр мĕн чухлĕ пур?
– Пĕр 500 тенкĕ...
– Канăрах...

* * *

Шейх вырăс хĕрне юратса пăрахнă. Качча илесшĕн хайхине.
– "Эпĕ сире уншăн хăй мĕн йывăрăш – çавăн чухлĕ ылтăн парăп", – тесе каларĕ, – пĕлтерет хĕрĕн ашшĕ юлташĕсене.
– Эсĕ вара мĕн терĕн?
– Пĕрер уйăх тăхтама сĕнтĕм.
– Тĕрĕс тунă. Пĕлсе пĕтер вăл шейхсене... Тĕплĕн шухăшласа пăхас пулать малтан.
– Мĕн шухăшламалли пур кунта? Хĕре лайăххах тăрантарас пулать.

* * *

Арçын киле çур çĕр иртни виçĕ сехетре таврăнать. Арăмĕ алăк умĕнче йĕтĕрпе кĕтсе илет.
– Миçе сехет çитнине пĕлетĕн-и? – ыйтать хĕрарăм. Арçын чĕнмест. Айăплă та – мĕн калăн?
– Апла акă сана – 1 сехет, – шаплаттарать арçынна йĕтĕрпе хĕрарăм. – Акă – 2 сехет, акă тата – 3 сехет!!!
– Юрать-ха 12-ре таврăнмарăм... – хыпалать пуçĕ çинчи мăкăле арçын.

* * *

Çул тăрăх "Запорожец" шăвать. Машинăна ПАИ инспекторĕ чарать.
– Мĕн пулнă? – ыйтать пуçне кăларса водитель.
– Сехетре 140 километр хăвăртлăхпа пыни çитмест, "мĕн пулнă?" – тесе ыйтать-ха тата!
Водитель тухать, инспектор енне машина çăраççине тăсать:
– Акă тытăр – сехетре хăть 100 километр таран хăвалама пултарсан штраф виçĕ хут тўлеме те хирĕç мар.

* * *

☺ И-ХИ-ХИК ☺

Бензин хакĕ ўсет, апат-çимĕç хакĕ ўсет, электроэнерги хакĕ ўсет... Яхта кăна йўнелнĕ. Вăт, савăнăç яланах кĕтмен енчен килет çав...

* * *

Маршруткăна вăрăм çўçлĕ каччăпа кинемей кĕреççĕ. Кинемей укçа кăларать:
– Хĕрĕм, водителе парсамччĕ...
– Эпĕ хĕр мар, – хуравлать каччă.
– Тупнă мĕнпе мухтанмалли! – хăтăрать кинемей.

* * *

Ашшĕ ывăлĕн дневникне пăхса ларнă май вĕçĕмсĕр пуçне сулкалать.
– Атте, мĕнле шухăшлатăн, – тет ывăлĕ, – кам айăплă кунта: урам-и е еткерлĕх-и?

* * *

– Мĕнле апат ку? – мăкăртатать арçын. – Какай таткине курмастăп та.
– Чунăм, ахалех пăшăрханатăн, – лăплантарасшăн ăна арăмĕ. – Эпĕ апата асаннен кулинари кĕнеки тăрăх хатĕрлерĕм!
– Мĕн çырнă вара унта?
– "Вунă пуслăх какай туянăр..."

* * *

Кўршĕсен виççĕри ывăлне калаçтаратăп.
– Мĕнле ĕçсем?
– Аван.
– Садике çўретĕн-и-ха?
– Çўретĕп.
– Кампа вылятăн?
– Арçын ачасемпе.
– Хĕр ачасемпе мĕншĕн вылямастăн тата?
– Укçа çук.

## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРЎСЕМ

### ПРОДАЮ

**4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка – бесплатно. **Т. 89875766562.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т.8-960-301-63-74.

**7.Срубы для бани.** Т. 37-28-74.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 89051990122.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. **Доставка.** Выездная сварка /генератор/. **Грузоперевозки.** Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**16.СЕТКУ-РАБИЦУ** от производ-ля: чёрную, зелёную, оцинкованную – около 100 видов; **сетку сварную,** столбы, скобы, проволоку, калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 8-937-952-22-11.

**20.Пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Найдёте дешевле – уступим. Без вых. Т. 89625989686.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.

**22.ОКНА пластиковые, железные ДВЕРИ.** Реально низкие цены. Гарантия. Т. 89871267170.

**23.Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень.** Д-ка. Т. 89061355241.

**24.ГРАБЛИ, косилки, сажалки, копалки,** окучники, опрыскиватели. Доставка. Т. 89278533596.

**33.Гравмассу, песок, керамзит, щебень,** торф. Недорого. Доставка. Т. 89053465671.

**35.Блоки керамзитобетонные** вибропрессованные, пропаренные. Дёшево. **Т. 89373866629.**

**45.АКЦИЯ! БЛОКИ** КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ 20х20х40 – **33** руб., 9х20х40, 12х20х40; **кольца** колодезные всех размеров от производителя, по низким ценам – бурение, монтаж; песок, гравмассу, щебень, торф, навоз, чернозем, КИРПИЧ в ассортименте. Д-ка. Т. 89196543499. Звоните!

**47.Керамблоки** 20х20х40 от производителя. Т.: 48-92-77, 8-903-389-90-38.

**52.Пластиковые ОКНА,** железные **ДВЕРИ.** Замер, доставка – бесплатно. Без выходных. Т.: 89176529694, 89276679588.

**59.СЕМЕНА кормовой свеклы "ЛАДА"** высокой репродукции. Тел.: 8/8352/ 73-39-11, 55-44-70, 8-961-346-38-34.

### ПРОДАЮ

**60.СЕМЕНА** высокоурожайных **томатов, огурцов, перцев** и др. Тел.: /8352/ 73-39-11, 75-80-34, 55-44-70, 8-961-346-38-34.

**61.Блоки керамзитобетонные** от производителя. Гарантируем высокое качество. Низкие цены. Доставка. Т. 89876734754.

**66.Заборы кованые.** Т. 89276689587.

**77.ТЕПЛИЦЫ: 3х6** – 12000 р., **3х8** – 15000 р. Доставка. Т. 48-16-54.

### УСЛУГИ

**51.Бурение колодцев,** скважин, **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 89373790080.

**96.Православный экстрасенс.** Т. 89876603929.

**99.Автоматические ворота, видеонаблюдение.** Т. 89278636398.

**152.Бурение скважин** на воду. Т. 8-960-302-12-93.

### КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 8-962-599-47-06.

**70.Дом** с участком в любом состоянии. Т. 8-960-300-87-87.

**80.Землю, дом** в Чебоксарском, Моргаушском районах. Т. 48-93-57.

**104.Бычков, коров, тёлок, овец,** свиноматок. Т. 8-937-014-49-97.

**587.Коров, бычков и лошадей.** Т. 89030659909.

### РАБОТА

**100.Требуются монолитчики.** Т. 89276678272.

**110.Монолитчики,** плотники, **монтажники,** шлифовщики, **каменщики,** сварщики. Питание, спецодежда. Вахта. Т. 89250022238.

## ШУТА ИЛĔР



Какай тутлăрах та сĕтеклĕрех пиçтĕр тесен ăна вăхăт-вăхăт хăйĕнчен тухакан çупа е вĕри шўрпепе пĕрĕхмелле.

Пĕçернĕ чухне какай çатма тĕпне ан çыпçăнтăр, тапĕ ан пултăр тесен духовка тĕпне тирĕкпе шыв лартмалла.

Хуппипе пĕçернĕ çĕр улмине шуратма çăмăлрах пултăр тесен çулăма чарсанах ăна самантлăха сивĕ шыва ямалла.

Ывăсран сухан, какай, пулă шăрши кĕрет тĕк ăна лимон хуппипе сăтăрмалла, хыççăн шывпа çуса ямалла.

Сухан туранă чухне çĕççе вăхăт-вăхăт сивĕ шывра йĕпетсен çимĕç макăртмĕ.

Çемçе çăкăр-батона çўхен касас тесен çĕççе вĕрекен шыва чиксе кăларăр.

Улма-çырла сĕтkenне тимĕр савăтра упрама юрамасть.

Кĕрпе тултарнă савăтра хуртсем ĕрчесе каясран унта 2-3 шăл ыхраман ыхра хурăр.

Типĕтнĕ кăмпана малтан шывра ислетмелле, кайран тип çупа ăшаламалла, унтан тин шыва ямалла. Яшка чылай тутлăрах та техĕмлĕрех пиçĕ.

Ăшаланă çĕр улми тутлăрах пултăр тесен сухана уйрăммăн ăшалăр, апат пиçес умĕн çеç хушса пăтратăр.

Рассольнике хушас умĕн хăяра малтан ăшаламалла, пăшăхламалла, кайран тин бульона хушмалла.

Купăстана пăшăхланă чухне хупăпа витмелле мар. Пиçес умĕн кăшт уксус тата сахăр хушсан чылай тутлăрах пулать.

« ХЫПАР » Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИПЕ МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, "ХЫПАР" ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ" АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор – тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ

Редактор – М.М.ИЛЬИНА

Дежурнăй редактор – М.Р.ТУМАЛАНОВА

Çырăнмалли индекс: 11515

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев служби 2013 çулхи ака уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ, 6 хут, "Чăваш хĕрарăмĕ"
ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ: 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.
Факс: /8352/ 28-83-70, 56-20-07
Электрон почти: hypar@chtts.ru

Хаçатри рекламăсăр тўлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшўллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", «Самана таппи»** рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 21 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.
56-00-23 – издательство директорĕ.
Тираж 9019. Заказ 540.